Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Август 28 ЭРНЕКУН № 168 (8077)

26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

РСФСР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕ (1 стр.).

РСФСР Верховнăй Совечĕн 1953 çулхи августăн 26-мĕшĕнче пулнă ирхи тата каçхи ларăвĕсем çинчен информациллĕ пĕлтерӳсем (1 стр.).

РСФСР-ăн 1953 çулхи Государство бюджечĕ çинчен тата РСФСР-ăн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен РСФСР Финанс министрĕ И. И. Фадеев депутат тунă доклад (2—3 стр.).

Малта пыракан колхозсенчен пример илсе, пур колхозсем те çак кунсенчех государствăна тырă парса татмалла тăвассишĕн кĕрешĕр! (3 стр.).

Совет Правительствипе Демократиллĕ Германи Республикин Правительство делегацийĕ хушшинче пулнă калаçусен итогĕсем çинчен урăх çĕршывсенче мĕн çыраççĕ (4 стр.).

Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палати пĕлтерни (4 стр.).

Россия Федерацийĕн Государство бюджечĕ

Августăн 26-мĕшĕнче Мускаврă, Кремльти Пысăк Дворецра, Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕ уçăлнă. Сесси кун йĕркине йышăннă хыççăн, РСФСР-ăн 1953 çулхи Государство бюджечĕ çинчен тата РСФСР-ăн 1951 тата 1952 çулсенчи бюджетне пурнăçлани çинчен доклад итленĕ. Сесси Бюджет комиссийĕн содокладне те итленĕ.

Союзлă республикăсен бюджечĕсем, ССР Союзĕн Государство бюджечĕн пайĕсем пулса, Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин политикине палăртса тăраççĕ. Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин политики социализмла халăх хуçалăхне пĕрмаях аталантарса, вăйлатса пырассине, ĕççыннисен материальнăй пурнăçĕпе культурăлла шайне ӳстерессине тĕп вырăна хурать. Совет Союзĕнчи халăхсем пурте, партипе правительство тавра тачă пĕтĕçсе, коммунизм строительствинче, хамăрăн юратнă Тăван çĕршывăн хăватне тĕреклетес ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн тăрăшаççĕ.

СССР Верховнăй Совечĕн нумай пулмасть пулса иртнĕ пиллĕкмĕш сессийĕнче промышленноçпа ялхуçалăхĕ енĕпе тата халăхăн материальнăй пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе умра тăракан задачăсене татăклăн кăтартса панă. Çав задачăсемпе ĕçсене пурнăçлама ССР Союзĕн 1953 çулхи бюджетĕнчен те, çавăн пекех союзлă республикăсен бюджечĕсенчен те укçа-тенкĕ парса тăма палăртса хунă.

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем, мирлĕ строительствăри аслă задачăсемпе хавхаланса, пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн социализмла ăмăртăва анлăрах сарса пыраççĕ. Çĕршывра массăсен творчествăллă пуçарулăхĕ куллен-кун ытларах палăрать, рабочисен, колхоз хресченĕсен, интеллигенцин ĕçри хастарлăхĕ ӳссе пырать. ССР Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ, вĕсен морально-политикăлла пĕрлĕхĕ тĕрекленсе пырать. РСФСР-ти халăхсем те, Совет Союзĕнчи тăванла халăхсемпе пĕрле, социализмла экономикăпа культурăна çĕнĕрен çĕклентерессишĕн, хамăрăн тĕп задачăна—ĕççыннисен материальнăй пурнăçне малалла лайăхлатас задачăна — пурнăçлассишĕн вăя шеллемесĕр кĕрешеççĕ.

Россия Федерацийĕ—пĕртан союзлă республикăсен ретĕнче пĕрремĕш вырăнта. Вăл Совет Союзĕн пĕтĕм территорийĕн тăватă пайĕнчен виçĕ пайне йышăнса тăрать. Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăх йышĕн çурри ытла РСФСР-та пурăнать. Россия Федерацийĕн анлă çĕрĕ çинче пирĕн йывăр промышленноçăн питĕ пысăк центрĕсем, çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçĕн пысăк предприятийĕсем вырнаçнă. Хамăр çĕршывра акса тăвакан пĕтĕм тĕштырăн виçĕ пайĕнчен икĕ пайне РСФСР-ти çĕрсем çинче акса тăваççĕ. РСФСР-та республикăна тата вырăнти органсене пăхăнса тăракан промышленность аталаннă, унта шкулсем, наука, санитари, сыватакан тата культурăпа çутĕç учрежденийĕсем нумай.

РСФСР-ăн 1953 çулхи государство бюджетне республикăн производительнăй вăйĕсене малалла аталантарассине, ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатассине ясра тытса тунă. Кăçал промышленноçа, ялхуçалăхне, хуçалăхăн ытти отраслĕсем валли, социально-культурăлла ĕçсем валли 51,9 миллиард тенкĕ уйăрса панă, ку вăл республика бюджетĕнчи пĕтĕм укçа-тенкĕн вунă пайĕнчен тăхăр пайĕ ытла пулать.

Республикăн халăх хуçалăхне вăйлатма укçа-тенкĕ уйăрса пани кăçал, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 2 миллиард тенкĕ ытла нумайрах, пĕтĕмпе 19 миллиард тенкĕ ытла пулать. Çак укçа-тенкĕ республикăри тата вырăнти органсене пăхăнса тăракан промышленноçа, ялхуçалăхне, пурăнмалли çурт-йĕр тата коммунальнăй хуçалăха, транспорта малалла аталантарма май парать. РСФСР-ăн республикăри, вырăнти тата кооперации промышленноçĕ халăха валли тавар туса кăларас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Республикăри промышленноçа, çавăн пекех ялхуçалăхне аталантарма укçа-тенкĕ ытларах уйăрса пани партипе правительство кăларса тăратнă задачăна—халăха валли кирлĕ япаласем туса кăларассине нумай ӳстерес задачăна пурнăçлама май парать.

РСФСР хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те капитальнăй ĕçсен анлă программине пурнăçласа пыраççĕ. Ку ĕçсене тума кăçал 7,8 миллиард тенкĕ каять. Çĕнĕ фабрикăсем, заводсем, коммунальнăй предприятисем тунипе пĕрлех пурăнмалли çуртсем, шкулсем, сывлăха сыхлакан учрежденисем, ача сачĕсемпе яслисем, кинотеатрсем тата ытти культурăпа йăла учрежденийĕсем нумай тума палăртнă. Кăçалхи пĕррремĕш çур çулта РСФСР министерствисемпе вырăнти Советсем пурăнмалли çуртсем тума укçа-тенкĕ уйăрса пани, иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, 22 процент ӳснĕ.

Республикăн Государство бюджетĕнчи укçа-тенкĕн пысăк пайĕ—41 миллиард тенке яхăн—социально-культурăлла ĕçсем валли каять. Халăха вĕрентме, сывлăха сыхлама тата физкультура ĕçĕ валли, социальнăй страхованипе социальнăй обеспечени валли укçа-тенкĕ нумай уйăрса пани Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви хамăр çĕршыври ĕççыннисен пĕрмаях ӳссе пыракан материальнăй тата культурăлла ыйтăвĕсене ытларах тивĕçтерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшни çинчен татах тепĕр хут калать.

РСФСР-ти крайсен, облаçсен тата автономиллĕ республикăсен бюджечĕсем çултан-çул ӳссе пыраççĕ. Вăрçă умĕнхи вăхăтрипе танлаштарсан, кăçал çав бюджетсен пысăкăшĕ икĕ хут ытла ӳснĕ. Крайсен, облаçсен тата автономиллĕ республикăсен бюджечĕсен пилĕк пайĕнчен икĕ пайĕ районсен тата ялсен бюджечĕсем пулса тăраççĕ, вĕсем ялти халăхăн ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Социализмла хуçалăхран пухăнакан тупăшсем пысăккăн ӳсни, çав вăхăтрах халăхран укçа-тенкĕ пухассине чакарса пыни пĕтĕм Совет государствин тата кашни союзлă республикăн бюджечĕсен паллă уйрăмлăхĕ пулса тăрать. Паллă ĕнтĕ, пирĕн çĕршыври ĕççыннисем кăçалхи çул хайсен укçипе налогсемпе сборсем тӳлесе тата заем çырăнса илсе СССР Государство бюджетне паракан тупăш, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, 21 миллиард тенкĕ сахалрах пулать. Халăхран укçа сахалрах пухмалла туни РСФСР бюджетĕнче те палăрса тăрать. СССР Верховнăй Совечĕ ялхуçалăх налогĕ çинчен йышăннă çĕнĕ Закон тăрăх кăçал Россия Федерацийĕнче çак налог сумми, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 2 миллиард та 400 миллион тенкĕ е 44,6 процент чакать.

Хуçалăхпа культурăна аталантарас енĕпе çитĕнӳсем тунă пулин те, Россия Федерацийĕнчи государство тата хуçалăх органĕсен ĕçĕнче çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Республикăра производство планĕсене, çавăн пекех тата продукцин хăйне лараках хакне чакармалли заданисене пурнăçламан предприятисем тата промышленность отраслĕсем те пур-ха. Республика промышленноçĕпе вырăнти промышленноçăн фабрикисемпе завочĕсем нумайăшĕ япăх продукци туса кăлараççĕ. Республикăри уйрăм районсенче вырăнти чĕртавартан таварсем туса кăларасси çине кирлĕ пек çаврăнса пăхмаççĕ.

РСФСР Верховнăй Совечĕн сессийĕнче палăртнă çав çитменлĕхсене пĕтерес пулать. Республикăри государство аппаратĕн, предприятисен тата хуçалăх организацийĕсен ĕçне лайăхлатмалла, шалти резервсене мобилизацилемелле, халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсенче тирпейлĕх режимне çирĕппĕн пурнăçласа пымалла.

РСФСР-ăн 1953 çулхи Государство бюджетне ăнăçлă пурнăçлани партипе правительство промышленноçа тата ялхуçалăхне малалла аталантарма, совет халăхĕн пурнăçне малалла лайăхлатма палăртса хунă задачăсене пурнăçа кĕртме пулăшĕ.

(«ПРАВДА» хаçатăн 1953 çулхи августăн 26-мĕшĕнчи умстатьи).

★

Шупашкар районĕнчи колхозсем государствăна тырă памалли плана тултарнă

ÇĔРПУ, августăн 27-мĕшĕ. (Телеграфпа). Шупашкар районĕнчи колхозсем государствăна тырă хатĕрлесе памалли плана августăн 26-мĕшĕ тĕлне 100,5 процент тултарчĕç. Тырă хатĕрлесе парас ĕçе «Красный флот», «1-ое Мая», «Серп и молот», Кадыков ячĕпе, Хрущев ячĕпе, Крупская ячĕпе, Калинин ячĕпе, Каганович ячĕпе, Коминтерн ячĕпе, Буденный ячĕпе тăракан колхозсем уйрăмах лайăх туса пычĕç. МТС ĕçлесе панăшăн натуроплата тӳлемелли счетсем тăрăх государствăна тырă парас ĕç малалла пырать.

КПСС райкомĕн секретарĕ М. ЗАЙЦЕВ.
Райисполком председателĕ А. СЕМЕНОВ.
Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕн начальникĕ П. ЕФРЕМОВ.
МТС директорĕ П. СМИРНОВ.

РСФСР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔСЕМ

РСФСР Верховнăй Совечĕн 1953 çулхи августăн 26-мĕшĕнче пулнă ларăвĕсем çинчен ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРӲ

Ирхи лару

Августăн 26-мĕшĕнче, ирхине 11 сехетре, Кремльте, Кремльти Пысăк Дворецра, РСФСР Верховнăй Совечĕн иккĕмĕш ларăвĕ пулнă.

Лару председателĕ—РСФСР Верховнăй Совечĕн Председателĕ Л. Н. Соловьев депутат.

Кун йĕркинче—РСФСР-ăн 1953 çулхи Государство бюджечĕ çинчен тата РСФСР-ăн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен тунă доклада сӳтсе явасси.

Пренире çаксем тухса каланă: А. П. Волков депутат (Люберцы округĕ, Мускав облаçĕ), И. С. Панькин депутат (Михайловски округ, Сталинград облаçĕ), Д. С. Полянский депутат (Джанкой округĕ, Крым облаçĕ), Н. Н. Коровецкая депутат (Ливны округĕ, Орел облаçĕ), Н. Е. Чеснонов юлташ (РСФСР Вырăнти тата топливо промышленность министрĕ), С. Н. Низамов депутат (Бугульма округĕ, Тутар АССР-ĕ), Г. А. Бездомов депутат (Полтавски округ, Челябинск облаçĕ), А. Т. Щепликов депутат (Зубцов округĕ, Калинин облаçĕ), В. С. Степанов юлташ (РСФСР Сывлăх министрĕ), М. Н. Шунько депутат (Кемеровски-Рудничнăй округ, Кемерово облаçĕ), К. В. Степанова депутат (Ярославль ял округĕ, Ярославль облаçĕ), Г. Ц. Цыдынжапов депутат (Прибайкальски округ, Бурят-Монгол АССР-ĕ).

Çакăнпа РСФСР Верховнăй Совечĕн иккĕмĕш ларăвĕ хупăннă.

Каçхи лару

Августăн 26-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, Кремльте, Кремльти Пысăк Дворецра, РСФСР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш ларăвĕ пулнă.

Лару председателĕ—РСФСР Верховнăй Совечĕн Председателĕ Л. Н. Соловьев депутат.

Ларура РСФСР-ăн 1953 çулхи Государство бюджечĕ çинчен тата РСФСР-ăн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен тунă доклада малалла сӳтсе явнă.

Пренире çаксем тухса каланă: Н. Д. Казьмин депутат (Ломоносовски округ, Ленинград облаçĕ), П. М. Хатанзейский депутат (Архангельски-Приморски округ, Архангельск облаçĕ), П. В. Сурин депутат (Кировски округ, Куйбышев хули), З. В. Миронова депутат (Сущевски округ, Мускав хули), Н. Г. Калин депутат (Сокольски округ, Вологда облаçĕ), И. А. Каиров депутат (Похвистнево округĕ, Куйбышев облаçĕ), М. М. Романова депутат (Вăрнар округĕ, Чăваш АССР-ĕ), С. К. Ламакин депутат (Кашин округĕ, Калинин облаçĕ), В. Я. Чуватов депутат (Рузаевка округĕ, Мордва АССР-ĕ).

Çакăнпа РСФСР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш ларăвĕ хупăннă.

РСФСР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕ

Августăн 25-мĕшĕнче Мускаврă, Кремльти Пысăк Дворецра, Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕ уçăлнă.

Сесси хăйĕн ĕçне совет халăхĕн хастарлăхĕ пысăккăн çĕкленнĕ вăхăтра тытăнчĕ. КПСС XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе тата СССР Верховнăй Совечĕн нумай пулмасть пулса иртнĕ пиллĕкмĕш сессийĕн решенийĕсемпе хавхаланса, совет çыннисем социализмла Тăван çĕршывăн халăх хуçалăхĕпе культурин мĕнпур отраслĕсене малалла аталантармалли, ĕççыннисен материальнăй пурнăçне лайăхлатмалли пысăк программăна ăнăçлăн пурнăçлаççĕ.

Совет Союзĕнчи тăванла пĕртан республикăсем хушшинче малта пыракан Россия Федерацийĕн мĕнпур кĕтесĕсенчен Мускава депутатсем—аслă вырăс халăхĕн тата Россия Федерацине кĕрекен ытти халăхсен представителĕсем килсе çитрĕç.

Сессире хăнасем—Мускаври предприятисенче ĕçлекен новаторсем, ученăйсем, литературăпа искусство деятелĕсем, Совет Çарĕн воинĕсем нумай.

Правительство ложисенче—РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн членĕсем министрсем. Ложăсенче — посольствăсемпе миссисĕн пуçлăхĕсем, Совет Союзĕнчи тата урăх çĕршывсенчи журналистсем.

Каçхине 7 сехет. Председатель сĕтелĕ хушшине РСФСР Верховнăй Совет Председателĕ Л. Н. Соловьев депутат, РСФСР Верховнăй Совет Председателĕн заместителĕсем К. М. Абдуллина, М. З. Азизов, А. С. Борисенко, А. А. Ильюшин, Н. А. Муравьева, И. В. Окунев, Е. И. Третьякова депутатсем тухаççĕ.

Правительство ложисене Г. М. Маленков, В. М. Молотов, Н. С. Хрущев, К. Е. Ворошилов, Н. А. Булганин, Л. М. Каганович, А. И. Микоян, М. З. Сабуров, М. Г. Первухин, П. К. Пономаренко, М. А. Суслов, П. Н. Поспелов, Н. Н. Шаталин юлташсем тухаççĕ. Вĕсене нумайччен тăвăллăн алă çупса кĕтсе илеççĕ.

РСФСР Верховнăй Совет Председателĕ Л. Н. Соловьев депутат РСФСР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕ уçăлнă, тесе пĕлтерет. Вăл доклад тума РСФСР Верховнăй Совечĕн Мандат комиссийĕн Председательне И. Т. Гришин депутата сăмах парать.

Гришин депутат РСФСР Верховнăй Совечĕн иккĕмĕшпе виççĕмĕш сессийĕсем хушшинче пилĕк суйлав округĕнче тухса ӳкнĕ депутатсем вырăнне çĕнĕрен депутатсем суйлани çинчен пĕлтерет.

Суйлавçăсем пурте коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăланă.

В. Н. Пономарев депутат сĕннипе, Верховнăй Совет суйланă депутатсен полномочийĕсем тĕрĕс пулни çинчен Мандат комиссийĕн докладне пĕр саслă пулса çирĕплетет.

Верховнăй Совет çакăн пек кун йĕрки йышăнать:

1. Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республикин 1953 çулхи Государство бюджетне тата РСФСР-ăн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен калакан отчета çирĕплетесси.

2. РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсене çирĕплетесси.

Доклад тума РСФСР Финанс Министрне И. И. Фадеев депутата сăмах параççĕ.

— Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕ,—тет вăл,—пирĕн çĕршывăн экономикипе культури çĕнĕрен пысăк хăватпа çĕкленсе пынă вăхăтра, Совет государствипе унăн тĕнчери авторитечĕ тата ытларах тĕрекленнĕ вăхăтра пулса иртет. Советлă социализмла государство экономикăпа культурăна малалла вăйлатмалли, ĕççыннисен материальнăй пурнăçне пĕрмаях лайăхлатса пымалли аслă программăна ăнăçлăн пурнăçлать.

РСФСР-ăн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен каласа, докладчик çакна палăртать: Россия Федерацийĕнчи халăхсем, мĕнпур тăванла халăхсемпе пĕрле, социализмла экономикăпа культурăна аталантарас ĕçре пысăк çитĕнӳсем турĕç.

РСФСР-ăн 1953 çулхи Государство бюджетне çак сессире 57.552,2 миллион тенкĕ çирĕплетме тăратнă. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, бюджет 3.292,4 миллион тенкĕ пысăкрах пулать.

Республика бюджечĕн тупăшĕсен тĕп пайĕ промышленноçран тата халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕсенчи государство предприятийĕсемпе хуçалăх организацийĕсенчен пухăнакан укçа тата оборотран пухăнакан налог укçи пулать. Халăхран пухăнакан укçа шучĕ, уйрăммăн илсен, ялхуçалăх налогĕ чакнипе, чакса пырать.

Крайсен, облаçсен тата автономиллĕ республикăсен бюджечĕсем вăрçăчченхипе танлаштарсан икĕ хут ытла ӳснĕ.

Предприятисен, организацисен тата учрежденисен финанспа хуçалăх ĕçĕсем çинчен каласа, Фадеев депутат чылай министерствăсене критиклет.

Докладчик çакна палăртать: министерствăсен, ведомствăсен, вырăнти Советсен исполнительнăй комитечĕсен задачи тупăшсем вăхăтра тата пĕтĕмпех пухăнмалла тума тăрăшасси кăна мар. Парти укçатенкĕне вырăнлă, пĕдсе расходлама вĕрентет, укçа пĕр пус та усăсăр сая каймалла мар.

— РСФСР Государство бюджетне ăнăçлăн пурнăçлани,—тет юлашкинчен Фадеев депутат,—Коммунистсен партийĕпе Совет Союзĕн Правительстви халăхăн пурнăç шайне малалла хăпартас тĕллевпе промышленноçпа ялхуçалăхне аталантарас тĕлĕшпе кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлама пулăшать.

Нимĕн иккĕленмелли те çук, пирĕн çĕршыври рабочисем, хресченсем, интеллигенци çак задачăсене чыслăн пурнăçлĕç, Партипе Правительство ертсе пынипе пирĕн социализмла Тăван çĕршыври мĕнпур халăхсен пурнăçне малалла хăвăрт лайăхлатса пырĕç!

Кун хыççăн Бюджет комиссийĕн председателĕ С. П. Афанасьев депутат содоклад тăвать.

Бюджет комиссийĕ республикăн государство бюджетне 88,4 миллион тенкĕ ӳстерсе çирĕплетме сĕнӳ тăратать. Çак укçа тупăшсен шутне кĕмелле.

Бюджет комиссийĕн содоклачĕ хыççăн РСФСР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш ларăвĕ хупăнать.

(ТАСС).

* * *

Иккĕмĕш кун ĕнтĕ Кремльти Пысăк Дворецра Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕн ларăвĕсем пулса иртеççĕ. Августăн 26-мĕшĕнче ирхи ларура РСФСР-ăн 1953 çулхи Государство бюджетне тата республикăн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен тунă отчета сӳтсе явма тытăннă.

Ирхине 11 сехет. Председатель сĕтелĕ хушшине РСФСР Верховнăй Совечĕн Председателĕ Л. Н. Соловьев депутат, Председатель заместителĕсем К. М. Абдуллина, М. З. Азизов, А. С. Борисенко, А. А. Ильюшин, Н. А. Муравьева, И. В. Окунев, Е. И. Третьякова, правительство ложисене—К. Е. Ворошилов, П. К. Пономаренко, М. А. Суслов юлташсем тухаççĕ. Депутатсемпе хăнасем вĕсене нумайччен алă çупса кĕтсе илеççĕ.

Лару председателĕ ирхи лару уçăлни çинчен пĕлтерет, А. П. Волков депутата (Мускав облаçĕ) сăмах парать.

— Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республикин бюджечĕ,—тет Волков юлташ,—Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви халăх хуçалăхне малалла аталантарассишĕн, ĕççыннисен материальнăй пурнăçне лайăхлатассишĕн, культурăллă шайне пĕрмай ӳстерессишĕн питех те хытă тăрăшнине уççăн кăтартса парать.

Вăл малалла Мускав облаçĕнчи колхозсемпе совхозсенче пахча çимĕç туса илессине ӳстерес тĕлĕшпе тăвакан ĕçсем çинчен калать. Çитес икĕ çул хушшинче Мускаври ĕççыннисен ыйтăвĕсене пĕтĕмĕшпех тивĕçтерме кирлĕ чухлĕ купăста, кишĕр, кăшман пухса илме тытăнаççĕ, помидорпа хăяр лартса тăвасси те нумай ӳсет.

Трибуна çинче—И. С. Панькин депутат (Сталинград облаçĕ). Вăл совет халăхĕ СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн решенийĕсене чун-чĕререн кăмăлласа йышăнни çинчен калать. Сталинградри тата Сталинград облаçĕнчи тĕслĕхсемпе депутат совет халăхĕ вăрçă хыççăн мирлĕ строительствăра пысăк çитĕнӳсем тунине кăтартса парать. Облаçра промышленность производствин пысăкăшĕ 1953 çулта, 1940 çулхипе танлаштарсан, 74 процент ӳснĕ.

Д. С. Полянский депутат (Крым облаçĕ) хăйĕн сăмахĕнче Крым пуянлăхĕсемпе усă курас ыйтусем çинче нумай чарăнса тăрать. Çулсеренех çĕнĕ санаторисемпе канмалли çуртсем ĕçлеме тытăнаççĕ. 1946 çулта Крымри санаторисемпе канмалли çуртсенче 100 пин çын каннă, кăçал курортниксемпе туристсен хисепĕ 400 пин çынтан иртет.

Н. Н. Коровецкая депутат (Орел облаçĕ), сессире тухса калакан ытти депутатсем пекех, Россия Федерацийĕн 1953 çулхи бюджечĕн проектне ырланă. Çав бюджетăн тĕллевĕ—социализмла государствăна малалла тĕреклетесси, унăн экономикипе культурине аталантарасси. Государство бюджетĕнче, тет депутат, Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви çыншăн, унăн ырлăхĕшĕн, унăн культурăллă аталанăвĕшĕн тăрăшни палăрса тăрать.

Коровецкая юлташ облаçра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтусем çинче чарăнса тăрать. Выльăх-чĕрлĕх йышĕ ӳсет, выльăх-чĕрлĕх витисем тăвас ĕç вара вăраххăн пырать. Çак ĕç кая юлса пынин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри вăл СССР Вăрман тата хут промышленность министерстви йывăç тăратмалли плансене тултарманни пулать. СССР тата РСФСР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствисем область валли çителĕклĕ таран специалистсем уйăрса памаççĕ.

РСФСР Вырăнти тата топливо промышленность министрĕ Н. Е. Чеснонов хăйĕн сăмахĕнче куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси ӳсни çинчен каласа панă. Вăл çапла пĕлтерет: министерство предприятийĕсен кăçал, тĕп плана тултарнисĕр пуçне, программăран ирттерсе халăх валли çур миллиард тенкĕлĕх таварсем туса кăлармалла, 1954 çулта тĕп йышши продукци енĕпе пилĕкçуллăх вĕçленнĕ тĕле палăртнă шая çитмелле. 34 сĕтел-пукан фабрикине пысăклатса çĕнетме тата çĕнĕрен 46 фабрика тума палăртаççĕ.

С. Н. Низамов депутат çапла калать: ССР Союзĕнчи халăхсен тăванла çемйинче, аслă вырăс халăхĕ пысăк пулăшу панипе, Тутар республикинчи ĕççыннисем хуçалăхпа культура строительствин пур облаçĕсенче те пысăк çитĕнӳсем тунă. Вĕсем 1953 çулхи заданисене срокчен пурнăçлассишĕн социализмла ăмăртăва анлăн сарса янă.

Г. А. Бездомов депутат (Челябинск облаçĕ) хăйĕн сăмахĕнче Кăнтăр Уралти хуçалăх ӳснине кăтартакан цифрăсемпе фактсем илсе кăтартнă. Юлашки 25 çул хушшинче облаçри шултра промышленность продукцийĕ 59 хут ӳснĕ. Кăнтăр Уралти предприятисем патша Российĕ пĕтĕмпе туса кăларнинчен нумайрах металл параççĕ. Кивĕ хуласем ӳсеççĕ, çĕнĕ хуласем çитĕнеççĕ. Пурăнмалли çурт-йĕр тата культурăпа йăла строительствин хăвăртлăхĕсем ӳсеççĕ. Анчах та çав хăвăртлăхсем хуласенчи халăх йышĕ ӳсничен каярах юлса пыраççĕ. Çакăншăн металлурги, çĕр кăмрăк промышленность, электростанцисен, çул-йĕр министерствисем чылай енчен ответлă пулса тăраççĕ. Вĕсем çуртсем, больницăсем, коммунальнăй учрежденисем тумалли плансене тăтăшах тултарса пымаççĕ.

А. Т. Щепликов депутат (Калинин облаçĕ) çапла пĕлтерет: юлашки икĕ çул хушшинче облаçри хуçалăха аталантарма пĕр миллиард тенке яхăн укçа-тенкĕ хывнă. Колхозсем государствăран питех те пысăк пулăшу илнĕ. МТС-сенчи тракторсен паркĕн хăвачĕ иртнĕ икĕ çул хушшинче 80 процент ӳснĕ. Самоходнăй комбайнсен хисепĕ—7,5 хут, йĕтĕн татакан машинăсен шучĕ икĕ хута яхăн ӳснĕ. Çакă вăл акакан çĕр лаптăкне пысăклатма, тырпул тухăçлăхне ӳстерме май панă. Иртнĕ çулта облаçри колхозсем государствăна вăрçăчченхи 1940 çулхинчен чылай ытларах йĕтĕн сӳсĕ панă. Депутат 1953 çулхи бюджет тăрăх укçатенкĕ ытларах уйăрса пама палăртни облаçри промышленноçа, ялхуçалăхĕпе культурăна малалла вăйлатма май пани çинчен калать.

РСФСР Сывлăх министрĕ В. С. Степанов сăмах илет. Вăл Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ĕççыннисен сывлăхĕшĕн хытă тăрăшни çинчен калать. Кăçал РСФСР-та больницăсенчи койкăсен хисепĕ 30 пине яхăн ӳсет, ача сачĕсем нумайланаççĕ; эмелсем тунма, больницăра выртакан чирлĕ çынсене çитерекен апат-çимĕçе лайăхлатма тата çĕршер миллион тенкĕ уйăрса параççĕ.

М. Н. Шунько депутат (Кемерово облаçĕ) Кузбасра—çĕршыври тĕп çĕр кăмрăк бассейнĕсенчен пĕринче—çĕр кăмрăкĕ кăларасси ӳсни çинчен калать. Вăрçăччен хипе танлаштарсан, çĕр кăмрăкĕ кăларасси икĕ хут ӳснĕ, коксланакан кăмрăк кăларасси икĕ хут çурă ӳснĕ. Халĕ бассейнри вăтам шахта çулталăк хушшинче революцичченхи Кузнецк бассейнĕнчи мĕнпур шахтăсем кăларнă чухлĕ çăркăмрăкĕ парать. Бассейнри шахтăсенче юлашки пилĕк çул хушшинче ĕç тухăçлăхĕ 50 процент ытла ӳснĕ.

Ĕççыннисен пурнăçпа йăла условийĕсем çултан-çул лайăхланса пыраççĕ. Облаçри шахтерсем, химиксем, металлургсем, машиностроительсем иртнĕ çулта кăна хăйсем валли 15 пин ытла радиоприемник, 20,5 пин велосипед, 2.500 мотоцикл, 2 пин çăмăл автомашина туяннă.

Облаçшăн пысăк вырăн йышăнса тăракан ыйтусене татса пама çителĕксĕр пулăшнăшăн Шунько юлташ чылай министерствăсене критиклет.

К. В. Степанова депутат хăйĕн сăмахĕнче Совет государствин çитĕнĕвĕсене Ярославль облаçĕнчи, уйрăммăн илсен Ярославль районĕнчи тĕслĕхсемпе кăтартса, парать. Юлашки çулсенче района пĕтĕмĕшпех электрификациленĕ; колхозсенче 300 ытла электромотор вырнаçтарса лартнă.

СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕн решенийĕсем, тет оратор, колхозниксен политикăлла активлăхне тата ĕçри хастарлăхне çĕнĕрен ӳстерчĕç. Облаçри чылай ялхуçалăх артелĕсем август уйăхĕнчех государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли мĕнпур обязательствăсене пурнăçлаççĕ.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин ленинла-сталинла наци политики, тет Г. Ц. Цыдынжапов депутат (Бурят-Монгол АССР-ĕ), совет республикисене пурне те экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен чечекленме май парать. Çакă вăл Бурят-Монгол АССР-ĕн бюджетĕнчен те уççăн курăнать. Бюджет, вăрçăчченхи 1940 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут ытла ӳснĕ. Промышленноçа, ялхуçалăхне малалла аталантарма, социально-культурăллă ĕçсем вали нумай укçа-тенкĕ уйăрса параççĕ.

Цыдынжапов депутат тухса каланă хыççăн ирхи лару хупăннă. (ТАСС).

РСФСР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĚН ЛАРАВĚСЕМ

РСФСР-ăн 1953 çулхи Государство бюджечě çинчен тата РСФСР-ăн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен

РСФСР Финанс Министрě И. И. ФАДЕЕВ депутат тунă доклад

Депутат юлташсем! Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечěн иккěмěш сессийě пирěн çěршывăн экономикипе культури çěнěрен пысăк хăватпа çěкленсе пынă вăхăтра, Совет государствин унăн тěнчери авторитечě тата ытларах тěрекленнě вăхăтра пулса иртет.

Советлă социализмлă государство экономикăна культурăна малалла вăйлатмалли, ěçсыннисен материальнăй пурнăçне пěрмаях лайăхлатса пымалли аслă программăна ăнăçлăн пурнăçлать.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзěн Верховнăй Совечěн нумаях пулмасть пулса иртнě пиллěкмěш сессийě пирěн çěршывшăн пысăк вырăн йышăнса тăракан решенисем йышăнчě. Совет халăхě СССР Верховнăй Совечěн сессийě ССР Союзěн 1953 çулхи Государство бюджечě çинчен тата ялхуçалăх налогě çинчен йышăннă законсене чěререн хапăл туса кěтсе илчě, çак законсене хамăрăн Тăван çěршывăн экономикăлла пысăк хăватне ÿсěн палăртса тăракан законсем, тесе тивěçлипе хак пачě.

ССР Союзěн çěнě бюджечě тата ялхуçалăх налогě çинчен йышăннă закон халăхăн тěп интересěсене тивěçтерессě, Коммунистсен партийěпе Совет Правительстви социализмла халăх хуçалăхне малалла çěклентерсе пырассишěн, ěçсыннисен материальнăй пурнăçне пур майсемпе те малалла лайăхлатса пырассишěн ывăнма пěлмесěр тăрăшнине кăтартса парассě.

Совет государствин бюджечě—мирлě строительство бюджечě. Вăл Совет державин мирлě пурнăça юратни çинчен ěнентермелле калаçса парать. Çавăнпа ěнтě ăна пěтěм халăх ырлать.

ССР Союзěн Министрěсен Совечěн Председателě Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечěн сессийěнче каланă сăмахра Совет государствин малти тата тулашри политикине пур енчен те никěслесе пачě тата промышленноçпа ялхуçалăхě енěпе вăраха ямасăр пурнăçламалли задачăсене кăтартса пачě. Çак задачăсене пурнăçлани тěп задачăна—рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин, мěнпур совет çыннисен вěçěмсěр ÿссе пыракан материальнăй тата культурăллă ыйтăвěсене пур енěпе те тивěçтермелли задачăна тата ăнăçлăрах пурнăçлама май парать.

Çак аслă задачăсемпе хавхаланса, Совет Союзěнчи ěçсыннисем пиллěкмěш пилěк çуллăх плана срокчен тултарассишěн социализмла ăмăртăва тата анлăрах сарса пыраççě. Çěршывра рабочисен, колхозхресченěсен, интеллигенцин ěçри хастарлăхě кунран-кун ÿссе пырать, Совет Союзěнчи халăхсен туслăхě, вěсен моральлě-политикăллă пěрлěхě тата ытларах тěрекленет.

Коммунистсен партийěпе унăн Центральнăй Комитечě тата Совет Правительстви тавра тачă пěтěçнě совет халăхě коммунизм обществи тумалли çулпа çирěппěн те шанчăклăн малалла пырать.

РСФСР-ăн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнăçланин итогěсем

Депутат юлташсем! Совет Союзěнчи мěнпур тăванла халăхсемпе пěрле пирěн Россия республикинчи халăхсем те социализмлă экономикăпа культура аталанăвěнче пысăк çитěнÿсем турěç.

1951, 1952 çулсенче тата 1953 çулхи пěрремěш çур çулта республика промышленноçěпе вырăнти промышленность пěтěмпе продукци туса кăлармалли плана иртерсе тултарчěç. Промышленность предприятийěсенче производство организацийě пěрмаях лайăхланса пырать, предприятисем техникăпа пуянланаççě, рабочисен культурăлла шайě ÿсет. Çак никěс çинче ěç тухăçлăхě ÿсет тата продукцин хăйне ларакан хакě чакать. Халăх хуçалăх планěн заданийěсене халăх хуçалăхěн ытти отраслěсенче те ăнăçлăн пурнăçланă.

Культура строительствинче пысăк çитěнÿсем тунă. Çичě çул вěренмелли тата вăтам шкулсенче вěрентес ěç вăйланнă май шкулсенчи 5—10-мěш классенче вěренекенсен шучě чылай ÿсрě. Çавăн пекех аслă шкулсемпе вăтам специальнăй шкулсенче вěренекен студентсен шучě те ÿсрě. Хуласемпе ялсенче библиотекăсем, клубсем тата ытти культурăлла учрежденисем нумайланса пыраççě. Халăха медицина пулăшăвě парасси лайăхланчě.

Пирěн республикăри хуçалăх строительствинчи çитěнÿсем РСФСР Государство бюджетне пурнăçланинче курăнса тăраççě. 1951 çулхи Государство бюджетне тупăшсем енěпе 55.821,0 миллион тенкě е 102,9 процент, расходсем енěпе — 54.830,4 миллион тенкě е 101,3 процент пурнăçланă. 1952 çулта тупăшсем 54.769,0 миллион тенкě пулнă, урăхла каласан, таварсен хакне йÿнетнине шута илсе, плана 100,6 процент тултарнă, расходсем 54.259,8 миллион тенкě пулнă е плана 99,9 процент тултарнă.

Производство ÿснě май, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетнě тата социализмла накопление ÿстернě май бюджет тупăшěнче государство предприятийěсемпе хуçалăх организацийěсен тупăшěнчен килсе тăракан укçа чылай ÿснě. Тупăшсен çак çăлкуçěнчен 1952 çулта бюджета 11.296,9 миллион тенкě, 1951 çулхинчен 1.973,1 миллион тенкě ытларах, кěнě.

Республикăри халăх хуçалăхне 1951 тата 1952 çулсенче бюджетран 21.088,6 миллион тенкě, социальнăй тата культурăлла ěçсем валли 76.128,7 миллион тенкě расходланă.

Государство бюджечě республикăри халăх хуçалăх планě тăрăх хуçалăхпа культурăна аталантарма палăртнă ěçсене çителěклě таран укçа-тенкě парса тăма тата ěçсыннисен пурнăçне лайăхлатма пулăшрě.

РСФСР-ăн 1953 çулхи Государство бюджечě

РСФСР Министрěсен Совечě РСФСР-ăн 1953 çулхи Государство бюджетне РСФСР Верховнăй Совечěн хальхи сессине 57.552,2 миллион тенкě çирěплетме тăратать. Иртнě çулхипе танлаштарсан бюджет 3.292,4 миллион тенкě пысăкрах пулать.

Бюджета тунă чухне РСФСР Министрěсен Совечě халăх хуçалăх планне, çавăн пекех совет халăхěн пурнăçне малалла лайăхлатас тěлěшпе правительство туса ирттерекен пысăк ěçсене шута илнě.

РСФСР-ăн 1953 çулхи Государство бюджечě республика промышленноçěпе вырăнти промышленноçа, ялхуçалăхне, çурт-йěрпе коммунальнăй хуçалăх строительствине, халăха вěрентес ěçе, сывлăха сыхлас ěçе, социальнăй обеспечени ěçне малалла аталантарма кирлě таран укçа-тенкě парса тăма май парать.

РСФСР-ăн 1953 çулхи Государство бюджечěн тупăшěсем

Республика бюджечěн тупăшěсенче промышленноçран тата халăх хуçалăхěн ытти отраслěсенчен пухăнакан тÿлевсем, государство предприятийěсемпе хуçалăх организацийěсен усламěсенчен илекен укçа-тенкě тата оборотран илекен налог тěп вырăн йышăнса тăрать. Çав тÿлевсем 1953 çулта 28.362,9 миллион тенкě пухăнмалла. Вěсен хисепě, 1952 çулхипе танлаштарсан, 9.889,3 миллион тенкě ÿсет, вěсен бюджетри виçи 1952 çулта 33,7 процент пулнă пулсан, 1953 çулта 49,3 процент таран ÿсет.

Государство предприятийěсемпе хуçалăх организацийěсен усламěсенчен илекен укçа-тенкě 12.363,5 миллион тенкě, пěлтěрхинчен 1.066,6 миллион тенкě ытларах пухăнмалла тума палăртнă. Çавăн чухлě укçа-тенкě 1953 çулта продукци ытларах туса кăларнипе, тавар çаврăнăшне анлă сарнипе, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетнипе, государство предприятийěсемпе хуçалăх организацийěсем тупăш ытларах илсе ěçленипе пухăнмалла.

Усламран илекен укçа-тенке пуринчен ытларах çăмăл тата апат-çимěç промышленноçěн предприятийěсем памалла. Çав предприятисенчен пěтěмпе 5.510,8 миллион тенкě е 1952 çулхинчен 1.420,5 миллион тенкě нумайрах пухăнмалла. Коммунальнăй предприятисем бюджета 2.191,3 миллион тенкě тата РСФСР Суту-илÿ министерствин предприятийěсем 1.534,2 миллион тенкě памалла.

Бюджетра оборотран илекен налог пысăк вырăн йышăнать, çав налог тăрăх бюджета 15.999,4 миллион тенкě кěрет. Ку налога пухма çирěплетнě план тăрăх республикăра 1953 çулта 176.247,0 миллион тенкě пухмалла, çав шутран 160.247,6 миллион тенкě союз бюджетне памалла. Республикăри тата вырăнсенчи ěçсене кăна мар, государствăн пěтěм союзри ěçěсене те пурнăçлама укçа-тенкě çителěклě парса тăрасси РСФСР территорийěнче оборотран илекен налог вăхăтра тата пěтěмпех пухăннинчен килет.

Усламран илекен укçа-тенкěсěр тата оборотран тÿлекен налогсăр пуçне, государствăна кооперацин предприятийěсем тата организацисем ытти тÿлевсем енěпе хуçалăхран бюджета 8.185,0 миллион тенкě памалла.

1953 çулта социализмла хуçалăхран илекен тупăшсем нумай ÿсеççě, çав вăхăтрах халăхран пухăнакан укçа-тенкě хисепě чакать. Государство заемěсене сарнипе пухăнакан укçа хисепě 3.706,2 миллион тенкě, 1952 çулхинчен 5.976,6 миллион тенкě сахалтарах пулмалла палăртнă. Государствăн халăхран илекен налогěсене 8.305,9 миллион тенкě пухма палăртнă. СССР Верховнăй Совечě Ялхуçалăх налогě çинчен йышăннă çěнě закон тăрăх ку налог енěпе пухăнмалли пěтěм укçа хисепě РСФСР-та кăçал 2 миллиард та 400 миллион тенкě чакать, çитес 1954 çулта ялхуçалăх налогěн хисепě, 1952 çулхипе танлаштарсан, икě хут çурă ытларах чакать. Ялхуçалăх налогě çинчен йышăннă çěнě закон колхозсене организаципе хуçалăх тěлěшěнчен çирěплетме, ялхуçалăхне малалла аталантарса пыма, колхозниксен тупăшěсене ÿстерме пулăшать.

Бюджета тупăшсем вăхăтра тата туллин пухăнса пычăр тесен, кашни предприяти питě лайăх тата палăртса хунă ассортиментлă продукци туса кăлармалли производство планěсене пěтěмпех тултарса пымалла, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетмелли заданисене пурнăçламалла, хуçалăх расчетне пур майсемпе те çирěплетсе, укçа-тенке тата пурлăха перекетлемелли йěркене çирěппěн пурнăçласа пымалла.

РСФСР-ăн 1953 çулхи Государство бюджечěн расхочěсем

Промышленность, ялхуçалăхě тата халăх хуçалăхěн ытти отраслěсем валли, социально-культурăллă ěçсем валли паракан укçа-тенкě РСФСР Государство бюджечěн тěп расхочěсем пулса тăрать. Çав ěçсене тума 1953 çулта 51.917,3 миллион тенкě е республика бюджетěнчи укçа-тенкěн вунă пайěнчен тăхăр пайě чухлě пама палăртнă. Çав шутран халăх хуçалăхне 10.927,0 миллион тенкě тата социально-культурăллă ěçсем валли 40.990,3 миллион тенкě памалла. Государство управленийěн органěсене тытса тăма каякан расходсем пěтěмпе 4.831,1 миллион тенкě тата ытти расходсем пěтěмпе 703,8 миллион тенкě пулаççě.

Укçа-тенке çакăн пек расходланинчен РСФСР-ăн Государство бюджечě производительнăй вăйсене малалла аталантармалли тата ěçсыннисен пурнăçне лайăхлатса пымалли задачăсене пурнăçлас тěллеве пăхăнса тăни курăнать.

Хуçалăх ěçěсене пурнăçлама каякан расходсенчен промышленноçа 1.072,5 миллион тенкě, ялхуçалăхне 3.288,9 миллион тенкě, пурăнмалли çуртсемпе коммунальнăй хуçалăх валли 4.306,5 миллион тенкě, çул-йěр хуçалăхěпе транспорт валли 746,6 миллион тенкě памалла. Пěлтěрхипе танлаштарсан, кăçал бюджетран халăх хуçалăхне памалли расходсен хисепě 728,3 миллион тенкě чухлě ÿсет.

Куйта çакна та шута илмелле: бюджетран панă укçасăр пуçне, халăх хуçалăхне аталантарма предприятисемпе хуçалăх организацийěсен хăйсен укçа-тенкинчен татах 8.198,2 миллион тенкě каять. Çапла вара, республика халăх хуçалăхне валли тухакан расходсен пěтěм хисепě 1953 çулта 19.125,2 миллион тенке çитет, çак хисеп вăл 1952 çулхинчен 2.077,0 миллион тенкě нумайрах.

Кăçал РСФСР хуçалăхěн пур отраслěсенче те капитальнăй ěçсен пысăк программине пурнăçласа пыраççě. Çав ěçсене пурнăçлама 7.807,0 миллион тенкě, вăл шутра бюджетран 5.806,1 миллион тенкě, предприятисен хăйсен ресурсěсенчен тата строительствăри ěçсен хăйне ларакан хакне йÿнетсе 2.000,9 миллион тенкě расходламалла.

Çěнě фабрикăсем, заводсем, коммунальнăй предприятисем тунă вăхăтрах, пурăнмалли çуртсем, шкулсем нумай лартма, сывлăха сыхлакан учрежденисем, ача сачěсем, яслисем, кинотеатрсем тата ытти культурăпа çутěç учрежденийěсем нумай туса лартма палăртнă.

Государствăн капитальнăй строительствин — РСФСР министерствисемпе ведомствисем пурнăçласа пыракан строительство ěçěсен хисепě 1953 çулти пěрремěш çур çулта, 1952 çулти малтанхи çур çултипе танлаштарсан, 14 процент ÿснě. Министерствăсем тата вырăнти Советсем енěпе пурăнмалли çуртсем лартма кăçалхи пěрремěш çур çулта, пěлтěрхи пěрремěш çур çултипе танлаштарсан, 22 процент ытларах укçа-тенкě панă.

Бюджетран социально-культурăллă ěçсем валли пама палăртнă укçаран халăха вěрентес ěçе 22.307,8 миллион тенкě, сывлăха сыхлас ěçпе физкультура ěçě валли 13.179,2 миллион тенкě, социальнăй страхованипе социальнăй обеспечени валли 5.503,3 миллион тенкě расходламалла.

Шкулсене тытса тăма 12.084,0 миллион тенкě пама палăртнă. Çавăн чухлě укçа пама палăртнă чухне хальхи пилěкçуллăх вěçленнě тěле республикăсен столицисенче, республикăна пăхăнса тăракан хуласенче, облаçсемпе крайсен центрěсенче тата промышленноçлă пысăк центрсенче пур ачасене те çичě çул вěрентмелли йěркерен пурне те вăтам шкултан вěрентсе кăлармалли йěркене куçассине пурнăçа кěртес тěлěшпе правительство туса пыракан ěçсене шута илнě.

Аслă шкулсене тата специалистсем хатěрлекен вăтам шкулсене тытса тăма, çавăн пекех тата кадрсем хатěрлеме, вěсен квалификацине ÿстерме 3.133,7 миллион тенкě уйăрса пама палăртнă.

1953—1954-мěш вěренÿ çулěнче шкулсенче 16.667 çын вěренмелле, çав шутра 5—10-мěш классенче иртнě вěренÿ çулěнче пулнинчен миллион ача ытларах пулмалла. Ялсенче ачасене вăтам шкулсенче вěрентес ěçе анлăн сарма кирлě условисем тума бюджетран шкулсен интернатěсене тытса тăма 434 миллион тенкě расходлама палăртнă, çав интернатсене вăтам шкулсенче вěренекен 430.000 ачана, 1952—1953-мěш вěренÿ çулěнче пулнинчен 93.000 ача нумайрах вырнаçтармалла.

Аслă шкулсенче тата специалистсем хатěрлекен вăтам шкулсенче 833.000 çын вěренмелле. Кăçал педагогсем вěрентсе хатěрлекен аслă шкулсен шучě чылай ÿсет. Учительсен институчěсен никěсě çинче 12 çěнě аслă шкул уçăлать. Педагогика шкулěсенче вěренекенсен пěтěм йышě 470.000 çынна çитет. Вěсене вěрентме 1.290 миллион тенкě расходламалла.

Врачсем тата вăтам пěлÿллě медицина работникěсем хатěрлес, вěсен квалификацине ÿстерес ěç валли укçа-тенкě нумай уйăрса пама палăртнă. Çитес вěренÿ çулěнче медицина институчěсенче, шкулěсенче, врачсен пěлěвěсене ÿстерекен институтсенче 136.000 çын вěренмелле.

Ялхуçалăхě валли кадрсем хатěрлеме 601 миллион тенкě расходлама палăртнă.

Ача-пăча учрежденийěсене тытса тăма 2.959,0 миллион тенкě памалла. Ача сачěсенче тата ача çурчěсенче 700 пин ача ытла усраса вěрентсе ÿстермелле.

Наука енěпе тěпчев ěçěсем тума 468,4 миллион тенкě пама палăртнă. Бюджет проектěнче библиотекăсене, клубсене, культура çурчěсене тата ытти культурăпа çутěç учрежденийěсене тытса тăма 1.157,9 миллион тенкě памалли çинчен каланă. Ялти библиотекăсен шучě ÿсет. 1953 çулхи январěн 1-мěшě тěлне ялсенче 13.154 библиотека пулнă пулсан, 1954 çулхи январěн 1-мěшě тěлне 18.760 библиотека пулмалла. Ялти клубсем 24.191 пулнă пулсан, 1954 çулхи январěн 1-мěшě тěлне 25.551 клуб пулмалла.

Кинотеатрсен шучě те ÿсет. Республикăра 26.730 киноустановка ěçлемелле. Ку шута профсоюзсен киноустановкисем кěмеççě. Çěнě кинотеатрсем лартма тата вěсем валли оборудовани туянма бюджетран 85,0 миллион тенкě уйăрса пама палăртнă.

РСФСР Государство бюджетěнчен сывлăха сыхлас ěçпе физкультура ěçě валли панă укçа-тенкě пěлтěрхинчен 1.192,9 миллион тенкě ытларах пулать. Чир-чěртен сыватакан тата профилактика учрежденийěсене—9.025,5 миллион тенкě, ача-пăча сывлăхне сыхлас енěпе ěçлекен профилактика учрежденийěсене — 1.341,3 миллион тенкě, санитари енěпе тумалли ěçсене пурнăçлама 756,6 миллион тенкě памалла.

Çак укçа-тенкě больницăсене, диспансерсене, ача çуратмалли çуртсене, санаторисене, ача-пăча учрежденийěсене пурне те тытса тăма çителěклě. Çавăн пекех ку укçа-тенкě хуласемпе ялсенчи больницăсенче койкăсен шутне 28,4 пин койка чухлě ÿстерме тата ача яслисенче вырăнсен шутне 12,2 пин вырăн чухлě ÿстерме каять.

СССР Верховнăй Совечěн пиллěкмěш сессийě больницăсене, поликлиникăсене тата ытти медицина учрежденийěсене укçа хушса пама йышăнчě,—çак бюджетра асăннă учрежденисене укçа хушса памалла тунă. Больницăра выртакан чирлě çынсене паракан апат нормине ÿстерме— 303,1 миллион тенкě, медикаментсем туянма—128,3 миллион тенкě, чирлě çынсем валли кěпе-йěм туянма—183,1 миллион тенкě, хуçалăхра кирлě япаласем туянма—159,5 миллион тенкě, сывлăх учрежденийěсене тěпрен юсама 77,2 миллион тенкě хушса пама палăртнă. Çакăн чухлě укçа хушса пани халăха медицина тата санитари пулăшăвě парас ěçе лайăхлатма пулăшать.

Социальнăй страхованипе социальнăй обеспечени валли паракан укçа-тенкě хисепě те пěлтěрхинчен ÿсет.

Республикăн государство аппаратне малалла лайăхлатма кирлě ěçсене тунă май, государство управленийěн органěсене тытса тăма тухакан расходсен хисепě 126,3 миллион тенкě чакать.

Министерствăсем, ведомствăсем, вырăнти Советсен исполкомěсем пур майсемпе те тăрăшнипе государство управленийěн органěсен ěçěсене лайăхлатмалла тата вěсене тытса тăма тухакан расходсене чакармалла.

Крайсен, облаçсен тата автономиллě республикăсен бюджечěсем

РСФСР Министрěсен Совечě проектра палăртнă тăрăх крайсен, облаçсен тата автономиллě республикăсен бюджечěсем пěтěмпе 43.399,6 миллион тенкě, пěлтěрхинчен 1.948,0 миллион тенкě ытларах пулмалла.

Крайсен, облаçсен, республикăна пăхăнса тăракан хуласен, автономиллě республикăсен бюджечěсем çакăн чухлě (пиншер тенкěпе шутласан) пулмалла туса çирěплетме тăрататăп:

Алтай крайě	769.334
Краснодар крайě	1.061.880
Сочи хули	56.747
Красноярск хули	105.703
Красноярск крайě	712.784
Приморье крайě	433.093
Ставрополь крайě	589.569
Хабаровск крайě	837.007
Амур облаçě	284.983
Архангельск облаçě	497.053
Астрахань облаçě	283.846
Брянск облаçě	473.644
Великие Луки облаçě	285.824
Владимир облаçě	475.444
Вологда облаçě	525.465
Воронеж облаçě	899.743
Горький хули	334.219
Горький облаçě	768.260
Грозный облаçě	249.030
Иваново облаçě	550.753
Иркутск облаçě	546.729
Калининград облаçě	278.507
Калинин облаçě	622.478
Калуга облаçě	375.946
Кемерово облаçě	722.176
Киров облаçě	711.145
Кострома облаçě	367.235
Крым облаçě	410.327
Севастополь хули	114.512
Куйбышев хули	263.245
Куйбышев облаçě	457.409
Курган облаçě	340.391
Курск облаçě	725.061
Ленинград хули	1.977.837
Ленинград облаçě	521.848
Молотов хули	201.327
Молотов облаçě	754.853
Мускав хули	3.716.066
Мускав облаçě	186.525,7
Мурманск облаçě	259.032
Новгород облаçě	328.552
Новосибирск хули	261.729
Новосибирск облаçě	445.957
Омск хули	158.529
Омск облаçě	389.702
Орел облаçě	458.391
Пенза облаçě	484.161
Псков облаçě	267.511
Дон çинчи Ростов хули	218.653
Ростов облаçě	783.689
Рязань облаçě	592.970
Саратов хули	208.190
Саратов облаçě	587.913
Сахалин облаçě	464.199
Свердловск хули	304.994
Свердловск облаçě	1.022.991
Смоленск облаçě	486.621
Сталинград хули	213.946
Сталинград облаçě	494.005
Тамбов облаçě	509.218
Томск облаçě	300.136
Тува автономиллě облаçě	128.209
Тула облаçě	506.856
Тюмень облаçě	477.447
Ульяновск облаçě	376.802
Челябинск хули	205.846
Челябинск облаçě	654.374
Чита облаçě	372.986
Чкаловск облаçě	593.240
Ярославль облаçě	535.826
Тутар АССР-ě	996.992
Вăл шутра: Хусан хули	192.133
Пушкăрт АССР-ě	990.825
Вăл шутра: Уфа хули	90.924
Дагестан АССР-ě	423.824
Бурят-Монгол АССР-ě	268.430
Кабардин АССР-ě	168.559
Коми АССР-ě	251.676
Мари АССР-ě	249.731
Мордва АССР-ě	350.416
Çурçěр Осетин АССР-ě	216.163
Удмурт АССР-ě	456.767
Чăваш АССР-ě	349.031
Якут АССР-ě	417.745

Крайсемпе облаçсен тата автономиллě республикăсен бюджечěсем çултан-çул ÿсеççě. Вăрçă умěнхи вăхăтпа танлаштарсан, вěсен бюджечěсен пысăкăшě икě хут ытларах ÿснě—1940 çулта 18.462,6 миллион тенкě пулнă пулсан, 1953 çулта 43.399,6 миллион тенке çитнě.

Крайсен, облаçсен тата автономиллě республикăсен 1951 тата 1952 çулсенчи бюджечěсене ăнăçлă пурнăçланă. Çапах та çакна каламалла: вырăнти хуçалăх резервěсене лайăхрах шута илсе ытларах усă курнă пулсан, вырăнти Советсен исполкомěсем хăйсен бюджечěсене лайăхрах пурнăçланă пулěччěç.

Акă, тěслěхрен, Ставрополь крайěнче 1952 тата 1953 çулсенчи бюджета тунă чухне крайисполком промышленноçри, коммунальнăй хуçалăхри, потребительсен кооперацийěнчи тупăшсене чылайăшне шута илмен пулнă. Хăшпěр облаçсен бюджечěсенче те çавăн пекех тупăшсене пěтěмпех шута илмен.

Çавăн пекех тата çакна та палăртмалла: Брянск, Орел тата Тамбов облаçěсенче тупăшсем енěпе бюджета вăхăтра тултарайман, Красноярск крайěнче вара бюджета тивěçсěр пăсса укçа-тенкě расходлани те пулнă. Малашне вырăнти Советсен исполкомěсемпе автономиллě республикăсен Министрěсен Совечěсен предприятисенче хуçалăхпа финанс ěçне йěркелесси çине тимлěрех çаврăнса пăхса, тупăшсене пěтěмпех пухмалла тăвас тата хăйсене пăхăнса тăракан учрежденисемпе предприятисем тата учрежденисем укçа-тенкěпе тěрěс усă курмалла тăвас тěлěшпе кирлě ěçсене тумалла.

Крайсемпе облаçсен тата автономиллě республикăсен бюджечěсенче пилěк пайěнчен икě пайě районсен тата ялсен бюджечě шутланать. Районсен тата ялсен бюджечěсем 1952 çулта 15,5 миллиард тенке çитнě,—вăрçă умěнхи 1940 çулта 6,8 миллиард тенкě пулнă. Çав бюджетсенчен иртнě çулта социально-культурăлла учрежденисем валли 12,8 миллиард тенкě ытларах расходланă пулнă,—1940 çулта çавăн пек расходсем 5,1 миллиард тенкě пулнă. Районсемпе ялсен бюджечěсенчен 1952 çулта 109.086 шкула, 15.674 библиотекăна, 42.127 ялти клубсемпе вулав çурчěсене, больницăсене, ача çуратмалли çуртсене тата 150.935 койка шутланакан сыватакан ытти учрежденисене, 144.096 вырăн шутланакан ача яслисене тата ытти учрежденисене укçа-тенкě парса тăнă.

Хуçалăхпа культура строительствинче районсемпе ялсен бюджечě пысăк вырăнта тăраççě пулин те, хăшпěр крайисполкомсем, облисполкомсем тата автономиллě республикăсен Министрěсен Совечěсем çав бюджетсем çине кирлě пек пăхмаççě. Çавăн пирки чылай çěрте ял бюджечěсене вăхăтра çирěплетмеççě, ялти учрежденисене ěçлеме кирлě укçа-тенке вăхăтра памаççě. Тěслěхрен, Свердлов облаçěнче тата Пушкăрт АССР-ěнче 1952 çулхи бюджета пěтěмěшпе илсен çителěклě пурнăçланă пулин те, ял бюджечěсем енěпе расходлассине чылай тултарайман.

Ялти çынсем ыйтнине тивěçтерме тивěçлě учрежденисене укçа-тенкě парса тăрассинче район тата ял бюджечěн пěлтерěшě ÿсни вырăнти Советсен исполкомěсене çав бюджетсене тăвассине тата бюджетсене пурнăçлассине лайăхрах ертсе пыма хушать.

Предприятисен, организацисен тата учрежденисен финанспа хуçалăх ěçне малалла лайăхлатассишěн

Депутат юлташсем! РСФСР-ăн 1953 çулхи халăх хуçалăх планěпе Государство бюджетне ăнăçлă пурнăçлама халăх хуçалăхěн мěнпур отраслěсенче хуçалăхпа финанс ěçěсене малалла лайăхлатни кирлě.

Республика тата вырăнти промышленность производство планěсене, ěç тухăçлăхне ÿстермелли тата продукцин хăйне ларакан хакне чакармалли заданисене тултарать тата социализмла накопление çултан-çул ÿстерет. Иртнě çул республика промышленноçě производство планне 102 процент тултарнă, предприятисенче ěç тухăçлăхě, 1951 çулхипе танлаштарсан, 7 процент ÿснě, продукцин хăйне ларакан хакě 6 процента яхăн чакнă. Кăçалхи çулăн малтанхи çулěнче промышленность производство планне 100,3 процент тултарнă, ěç тухăçлăхě 1952 çулăн малтанхи çур çулěнчипе танлаштарсан 6 процент ÿснě тата продукцин хăйне ларакан хакě 4 процента яхăн чакнă.

Пурте пěлеççě, ěç тухăçлăхěпе продукцин хăйне ларакан хакě промышленноçăн пěтěм ěçěнчи пахалăхне кăтартса тăраççě, ěç тухăçлăхне ÿстернипе продукцин хăйне ларакан хакне чакарни государствăшăн пысăк пěлтерěшлě ěç пулать. «Производствăн мěнпур отраслěсенче продукцин хăйне ларакан хакне чакарасси тата ěç тухăçлăхне ÿстересси, — тенě Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечěн пиллěкмěш сессийěнче тухса каланă сăмахра,—совет халăхěн материальнăй пурнăçне лайăхлатас ěçре татăклă вырăн йышăнса тăраççě. Пирěн предприятисенче ěç тухăçлăхě мěн чухлě пысăкрах, продукцин хăйне ларакан хакě, мěн чухлě пěчěкрех, çавăн чухлě мěнпур продуктсемпе таварсен хакě йÿнěрех, халăхăн пурнăç шайě çавăн чухлě пысăкрах пулать».

Маленков юлташ çакăн пек кăтартса пани уйрăмах республика промышленноçěпе вырăнти промышленноçшăн пысăк пěлтерěшлě пулса тăрать. Пирěн ěç тухăçлăхě пěчěккě пулнă пирки производство планěсемпе продукцин хăйне ларакан хакне чакармалли заданисене тултарман предприятисем çеç мар тата промышленность отраслěсем те пур-ха.

РСФСР Строительство материалěсем тăвакан промышленность министерствин предприятийěсем 1952 çулта пěтěмпе продукци туса кăлармалли плана 94,8 процент кăна тултарнă. Вăл шутран хěрлě кирпěч туса кăлармалли плана 92,8 процент, силикат-кирпěч туса кăлармалли плана 92,1 процент кăна тултарнă. Заводсенче производствăн çěнě хăвачěсене ěçе вăхăтра кěртсе пыман, оборудованипе туллин усă курман, хěллехи условисенче ěçлеме начар хатěрленнě. «Россиликаткирпич» трестěн предприятийěсенче прессем ěç вăхăтне 16,7 процент усăсăр тăрса ирттернě, экскаваторсем 13,1 процент усăсăр тăнă. Производство планне тултарман пирки тата продукцин хăйне ларакан хакне ÿстернě пирки строительство материалěсем тăвакан промышленность план тăрăх 22,3 миллион тенкě тупăш парас вырăнне 3,2 миллион тенкě убыток панă.

Республикăна пăхăнса тăракан вырăнти промышленность предприятийěсем иртнě çулта продукци туса кăлармалли плана 102,6 процент тултарнă, анчах та план тăрăх туса кăларма палăртнă 73 тěслě продукцирен производство программине 43 издели тăрăх кăна тултарнă. Вырăнти промышленноçăн нумай заводěсем çаплах начар продукци туса кăлараççě-ха. Фарфорпа фаянс промышленноçěн тěп управленийěн предприятийěсенче продукцин сортлăхне чакарнине пула çухатусем 6,1 миллион тенкěлěх пулнă. Вырăнти промышленность заводěсенче вырăнсăр тăкаксем нумай тăваççě, смета дисциплинине пăсаççě, цехсемпе заводсенчи расходсене ÿстереççě. 1952 çулта республикăна пăхăнса тăракан вырăнти промышленность предприятийěсенче цехсенчи расходсене 6,5 миллион тенкěлěх, производство расхочěсене 15,1 миллион тенкěлěх ÿстернě. Çаксене пула республикăна пăхăнса тăракан вырăнти промышленность предприятийěсем продукцин хăйне ларакан хакне чакармалли задание тултарман, накоплени тумалли плана 15,9 миллион тенкěлěх тултарса çитермен, бюджета чылай укçа парса çитеймен.

Халăх хуçалăх планěн заданийěсене çăмăл тата апат-çимěç промышленноçěн предприятийěсем те нумайăшě тултарман. Çак отраслěн предприятийěсенче вырăнсăр расходсем пысăк пулаççě. Эрех промышленноçě иртнě çулта 25 миллион тенкěлěх ытла вырăнсăр расходсем тунă, ку вăл, паллах, продукцин хăйне ларакан хакне ÿстерме кăна пултарнă.

(Юлашки 3-мěш страницăра).

РСФСР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔСЕМ

РСФСР-ăн 1953 çулхи Государство бюджечĕ çинчен тата РСФСР-ăн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен

(Юлашки. Пуçламăшĕ 2-мĕш страницăра).

Çăмăл промышленноçăн чылай предприятийĕсем пĕр тикĕс ĕçлемеççĕ. Рязань облаçĕнчи Спасскри тир-сăран завочĕ 1952 çулта çулталăк тăршшĕпех уйăхра туса кăлармалли продукцин çуррине тенĕ пекех уйăхăн юлашки вунăкунлăхĕнче кăларса тăнă, çавăн пирки те завод производство программине тултарман, продукцин хăйне ларакан хакне 7,7 процент ÿстернĕ. Çăмăл промышленноçăн чылай предприятийĕсенче продукцин хăйне ларакан хакне ÿстерни оборудованипе начар усă курнинчен килнĕ. Çакăн пек предприятисен шутне, уйăрммăн илсен, Ростоври тата Горькири чăлха фабрикисем, Новосибирскри çыхнă тумтир тăвакан фабрика кĕрессĕ.

Шалти резервсене мобилизацилес ĕçре продукцин хăйне ларакан хакне тĕрĕс планлани пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çав вăхăтрах ку ĕçре нумай çитменлĕхсем пур-ха. Чылай чухне министерствăсен тĕп управленийĕсем чĕртаварпа материалсем расходламалли нормăна ÿстерсе йышăнаççĕ, пысăк сортлă продукци туса кăлармалли задание чакарса параççĕ, цехсемпе заводсен расхочĕсен сметисене ытлашши ÿстерсе яраççĕ. Тĕслĕхрен, РСФСР Çăмăл тата апат-çимĕç промышленность министерствин çыхнă тумтирсем тăвакан промышленноçăн тĕп управленийĕ 1952 çул валли чăлха-носкисен хăйне ларакан хакне планланă чухне чĕртавар ытлашши расходлама палăртнă. Çип расходламалли плана нимĕн сăлтавсăр ку таранччен пулнă шайран 10 процент ытла ÿстернĕ.

Пир-авăрпа галантерея промышленноçĕн предприятийĕсенче уйрăм изделисем тăрăх пĕрремĕш сортлă продукци туса кăларассине иртнĕ çулхипе танлаштарсан сахалтарах кăтартса панă. Çакна пула накоплени тăвасси тата бюджета укçа уйăрса парасси чакнă.

Министерствăсемпе вĕсен тĕп управленисем убытокпа ĕçлекен предприятисен шутне тата вĕсен убыточĕсене чакарма кирлĕ ĕçсене çителĕклĕ тумаççĕ. Кун çинчен çак факт калаçа парать: 1952 çул валли тунă планра министерствăсем нумай предприятисем тăрăх, уйăрммăн илсен, çăмăл тата апат-çимĕç промышленноçĕн республикăри 82 предприятийĕ тăрăх, вырăнти тата топливо промышленноçĕн 35 предприятийĕ тăрăх, вăрман тата хут промышленноçĕн 33 предприятийĕ тăрăх тата строительство материалĕсем тăвакан промышленноçăн 26 предприятийĕ тăрăх убыток тума пăхса хунă. Çак предприятисен убыткне ытти, лайăх ĕçлекен предприятисен шучĕпе витсе тăмалла пулнă. Çакнашкал практика хуçалăх расчечĕн никĕсне вăйсăрлатнă, государство бюджечĕн тупăшĕсене ÿстерме паман.

Укçа-тенке перекетлеме коммунальнăй хуçалăхра пысăк резервсем пур. Коммунальнăй электростанцисем иртнĕ çул электроэнерги туса кăларассине, 1951 çулхипе танлаштарсан, 7 процент ÿстернĕ. Çав вăхăтрах вĕсем электроэнерги панă чухне 13 процента яхăн çухатнă. Брянск облаçĕнчи коммунальнăй электростанцисем электроэнергие 22 процент таран, Калуга облаçĕнчи коммунальнăй станцисенче 25 процент таран çухатнă.

Коммунальнăй водопроводсем шыв парса тăмалли плана, пĕтĕмĕшпе республикипе илсен, иртнĕ çулта ирттерсе тултарнă. Анчах та 71 хулари водопроводсем шыв парса тăрас тĕлĕшпе хăйсем валли çирĕплетнĕ заданисене пурнăçламан, çавăн пекех тата усăсăр расходсем чылай тунă. Çакă вăл халăха шыв парса тăрассине кирлĕ пек туса пыма кансĕрленĕ тата халăха парса тăракан шывăн хăйне ларакан хакне ÿстернĕ.

Строительство организацийĕсенче ĕçĕн хăйне ларакан хакне йÿнетессишĕн тата перекетлĕх режимĕшĕн çителĕксĕр кĕрешеççĕ. РСФСР Пурăнмалли çурт-йĕрпе гражданла строительство министерствин строительство тресчĕсем 1952 çулта, планпа строительство хакне 3,0 процент йÿнетме палăртнă пулсан, 5,6 процент ÿстернĕ, çавна май вара, тупăш илес вырăнне, убыток курнă.

Пурăнмалли çурт-йĕрпе гражданла строительство министерствин Курск облаçĕнчи тресчĕ ĕçе çителĕксĕр организиленĕ пирки пĕлтĕр строительство планне тултарман, ĕçсен хакне сметăпа пăхниннчен 664 пин тенкĕ чухлĕ ÿстернĕ, пĕр миллион тенкĕ ытла убыток тунă. Трест кăçал та япăх ĕçлет. Пĕрремĕш çур çулта строительствăпа монтаж ĕçĕсен планне пурĕ те 67,9 процент çеç тултарнă, строительство хакне 8,4 процент ÿстернĕ, çавна пула çĕнĕрен 974 пин тенкĕ убыток тунă.

Пурăнмалли çурт-йĕрпе гражданла строительство министерствин юлса пыракан трестсен ĕçне лайăхлатма татăклă ĕçсем тăвас пулать.

РСФСР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин хăшпĕр совхозĕсемпе ытти организацисенче перекетлĕх режимне пурнăçламаççĕ. Пушкăрт АССР-ĕнчи чылай совхозсенче 1952 çулта ытлашши расходсем тунă пирки уй-хирте туса илекен тата выльăх-чĕрлĕхрен илекен мĕнпур йышши продукци хакне ÿстернĕ. Чкалов облаçĕнчи совхозсенче те укçа-тенкĕпе материалсене плана палăртниннчен ытларах расходланă. Çак министерствăн строительство управленийĕн вăрман хатĕрлекен кантурĕсем финанс дисциплинине пăснă, Ставропольри вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен кантурах законсăр йĕркепе 5,8 миллион тенкĕ расходланă.

РСФСР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин совхозсен тата хăйне пăхăнса тăракан ытти предприятисен финанспа хуçалăх ĕçне лайăхлатмалла, государство укçа-тенкине тĕрĕс тата перекетлĕн расходламалла тăвас пулать.

Предприятисемпе хуçалăх организацийĕсен ĕçĕнче ытти пысăк çитменлĕхсем те пур. Нумай предприятисем хăйсем валли уйăрса панă оборотри укçа-тенке упраççĕ. Çакăн пек предприятисем уйрăмах РСФСР Вăрман тата хут промышленность министерствипе Пурăнмалли çурт-йĕрпе гражданла строительство министерствин системинче нумай.

Çак министерствăсене, вĕсене пăхăнса тăракан предприятисемпе организацисен оборотри хăйсен укçи-тенкине çителĕклĕ тăвас шутпа, РСФСР Министрĕсен Совечĕ финанс тĕлĕшĕнчен пулăшу пачĕ.

Пулăшу панă пулин те, Вăрман тата хут промышленность министерствипе Пурăнмалли çурт-йĕрпе гражданла строительство министерстви хăйсене пăхăнса тăракан нумай предприятисенче 1953 çулхи пĕрремĕш çур çулта хăйсен оборотри укçи-тенкине упрамалла туман.

Министерствăсемпе ведомствăсен предприятисенче хăйсен оборотри укçи-тенкипе усă курассине лайăхлатма кирлĕ ĕççене тумалла.

Государство бюджечĕн тупăшĕсенче суту-илÿ организацийĕсен тÿлевĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Республикăра ваккăн сутакан тавар çаврăнăшĕ кварталтан квартала ÿссе пырать. Тавар хакĕсене йÿнетнĕ, халăха кирлĕ таварсем туса кăларасси ÿснĕ май тата сутмалли таварсен фончĕсене ÿстерес тĕлĕшпе туса ирттернĕ ытти ĕçсене пула, 1953 çулхи II-мĕш кварталта, 1952 çулхи II-мĕш кварталтипе танлаштарсан, халăха 23 процент нумайрах тавар сутнă. Çакăнпа пĕрлех ассортимент пĕрмай пысăкланса, таварсен пахалăхĕ лайăхланса пырать, тавар илекенсен ыйтăвĕсене тивĕçтересси аванланать.

Анчах та, калас пулать, суту-илÿ организацийĕсен ĕçĕнче, çавăн пекех РСФСР Суту-илÿ министерствин ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Халăха мĕнле таварсем кирлине çаплах çителĕксĕр тĕпчесе пĕлеççĕ, ĕççыннисен ыйтăвĕсем ÿссе пынине шута илмеççĕ. Нумай суту-илÿ организацийĕсен руководителĕсем тавар тăратакансен умне пысăк требованисем лартмаççĕ, туса кăларакан продукцин пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешмеççĕ.

Суту-илÿ организацийĕсенчен чылайăшĕ перекетлĕх режимне пурнăçлассишĕн, хуçасăрлăх пирки пулакан тăкаксене пĕтерессишĕн тата тавар çаврăнăшĕнче пулакан расходсене чакармалли заданисене пурнăçлассишĕн кĕрешесси çине тимлĕ пăхмаççĕ. Çак сăлтавсене пула РСФСР Суту-илÿ министерствин организацийĕсем иртнĕ çулта накоплени тумалли плана 358,8 миллион тенкĕ чухлĕ тултарайман, Государство бюджетне усламран 162,5 миллион тенкĕ парса татман.

РСФСР Суту-илÿ министерствин тата вырăнти Советсен исполнительнăй комитечĕсен суту-илÿ организацийĕсенчи çитменлĕхсене пĕтермелле, тавар çаврăнăш планне тултарас тата государство бюджечĕ умĕнчи обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе суту-илÿ организацийĕсен руководителĕсенчен çирĕпрех ыйтмалла.

Партипе Правительство халăх валли кирлĕ таварсем туса кăларассине ÿстерме пур майсемпе те тăрăшаççĕ. СССР Правительстви кăçал куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли задание 32 миллиард тенкĕ чухлĕ ÿстерсе çирĕплетрĕ. Çак таварсене туса кăларас ĕçре РСФСР-ти вырăнти тата кооперации промышленноçĕ чылай пысăк вырăн йышăнать. Правительствăн заданине пурнăçлама республика промышленноçĕн пур майсем те пур. Резервсемпе кăна туллин усă курас пулать.

Кунпа пĕрлех çакăн çинчен калас пулать: уйрăм районсенче вырăнти чĕртавартан таварсем туса кăларасси, вĕсен пахалăхне лайăхлатасси çине кирлĕ пек пăхмаççĕ. Çакна пула, сăмахран, Челябинск облаçĕнче иртнĕ çулта 38 районти тата хулари промкомбинатран 17 комбинат производство программине пурнăçламан, халăх вара тĕрлĕ таварсем 4,6 миллион тенкĕлĕх сахалтарах илнĕ. Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта 16 комбинат плана тултарман. Иркутск облаçĕнче те ĕçсем кунтан лайăхах мар. Кăçалхи иккĕмĕш кварталта асăннă облаçра промысла кооперацийĕн 150 артелĕнчен 46 артель производство планне тултарман.

Чылай районсенче ĕççыннисен йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен мастерскойсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. 1952 çулта Молотов облаçĕнче сĕтел-пукан, атă-пушмак, тумтир юсамалли плана тултарман. Иваново, Тюмень облаçĕсенче, Пушкăрт АССР-ĕнче ĕççыннисен йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен мастерскойсен шучĕ промысла кооперации енĕпе ÿсес вырăнне чакнă.

Куллен кирлĕ япаласем тунас тĕлĕшпе халăх ыйтăвĕсене туллинрех тивĕçтерес тата бюджета тупăш енĕпе пурнăçламалла тăвас тесе, вырăнти Советсен исполнительнăй комитечĕсен вырăнти промышленноçпа кооперации промышленноçĕ пысăк пахалăхлă продукци туса кăларассине ÿстермелле тата халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен предприятисене ытларах пулăшмалла.

Депутат юлташсем! Министерствăсен, ведомствăсен тата вырăнти Советсен исполнительнăй комитечĕсен задачи тупăшсене вăхăтра тата пĕтĕмпех пухса çитермелле тăвасси çеç пулмасть. Парти çапла вĕрентет: пирĕн пухăннă укçа-тенке пĕлсе, тĕрĕс, усăллă расходламалла, халăх пурлăхĕ пĕр пуслăх та сая кайни ан пултăр.

Маларах калаиничен çакă курăнать: республикăн государство бюджетĕнчи укçа-тенкĕн пысăк пайĕ социально-культурăлла ĕçсем тунă çĕре каять. Çавăнпа ку укçа-тенкĕпе уйрăмах пĕлсе, тĕрĕс усă курмалла тăвас пулать.

Сутĕç пайĕсемпе сывлăх пайĕсем тĕрĕслесе тăманнине пула сутĕç тата халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен хăшпĕр учрежденисенче государство укçа-тенкине тĕрĕс мар расходлаççĕ, хăшпĕр чухне виçерен тухса укçа пĕтереççĕ. 1952 çулта финанс органĕсем сутĕç учрежденийĕсенче 39 миллион тенкĕ, халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисенче 36 миллион тенкĕ тĕрĕс мар пĕтернине палăртнă.

РСФСР Сутĕç министерствипе РСФСР Сывлăх министерствин тата вырăнти Советсен исполнительнăй комитечĕсен бюджетран уйăрса паракан укçа-тенкĕпе тĕрĕс тата перекетлĕ усă курмалла тăвас пулать.

Финанс дисциплинине пăснине тата укçа-тенке вырăнсăр пĕтернине хирĕç кĕрешессине государство управленийĕн органĕсенче пур майсемпе те вăйлатмалла. Республикăра перекетлĕх режимне пурнăçламан учрежденисемпе предприятисен руководителĕсем те пур-ха. Сăмахран, çăмăл тата апат-çимĕç промышленность предприятийĕсенче финанс дисциплинине нумай пăсаççĕ. Пĕлтĕр хăшпĕр предприятисен цехĕсенче администрацине управлени енĕпе ĕçлекенсем штатпа палăртниннчен нумай ытларах пулнă. Вĕсене тытса тăма государство укçи-тенкине тĕрĕс мар пĕтернĕ. 1952 çулта çăмăл тата апат-çимĕç промышленность предприятийĕсем сметăран ирттерсе 6,6 миллион тенкĕ пĕтернĕ.

Штатра палăртниннчен ытлашши работниксем тытнă, сметăран ирттерсе укçа-тенкĕ расходланă, дисциплинăна штат енĕпе тата смета енĕпе урăх майпа та пăснă тĕслĕхсем хăшпĕр крайсемпе облаçсенчи, сăмахран, Горький облаçĕпе Калуга облаçĕнчи бюджетран укçа-тенкĕ илсе тăракан учрежденисемпе хуçалăх организацисенче те пулнă.

Перекетлĕх режимне çирĕп тытса пырасси министерствăсемпе ведомствăсене тата вырăнти Советсен исполнительнăй комитечĕсене хăйсене пăхăнса тăракан ведомствăсене финанс тĕлĕшĕнчен ытларах тĕрĕслесе тăма хушать. Ведомствăсем енĕпе тĕрĕслес ĕçри пысăк çитменлĕх ревизисене япăх ирттерни пулать. Çакăн пек тĕслĕхсем сахал мар пулаççĕ: ведомствăсенчи ревизорсем хăйсем тĕрĕсленĕ учрежденисем йĕркеллĕ ĕçленĕ тесе палăртаççĕ, Финанс министерствипе Государство контроль министерстви енĕпе тепĕр хут тĕрĕслесен, çав учрежденисенче финанс дисциплинине пăсни курăнать.

Хуçалăх планĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешес, шалти резервсене мобилизацилес, перекетлĕх режимне пурнăçлас ĕçре финанс органĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Çакна палăртас пулать: республикăри финанс органĕсем хăйсем умне кăларса тăратнă задачăсене çителĕксĕр пурнăçлаççĕ.

Хăшпĕр финанс органĕсем предприятисемпе отраслĕсен экономикине япăх тĕпчеççĕ, вĕсен ĕçне сахал тĕрĕслеççĕ, бухгалтери отчечĕсемпе балансĕсене кирлĕ пек тишкĕрмеççĕ. Çавăн пек финанс органĕсен шутне Великие Луки тата Ульяновск облаçĕсенчи финанс пайĕсемпе Мари АССР-ĕн Финанс министерстви кĕреççĕ, Асăннă финанс органĕсем 1952 çулхи отчетсене пăхса тухнă чухне вырăнти хуçалăх организацисен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене палăртман.

Финанс органĕсен хуçалăх планĕсене тултарнине, перекетлĕх режимне пурнăçланине, çавăн пекех предприятисемпе организацисем пурте хăйсен бюджет умĕнчи обязательствисене пĕтĕмпех тата вăхăтра пурнăçласа пынине, государство укçи-тенкине тĕрĕс расходланине тĕрĕслесе тăрас ĕçе вăйлатмалла.

Депутат юлташсем! Сире каласа панă государство бюджечĕ РСФСР-ти халăхсен пурнăçри интересĕсене пĕтĕмпех тивĕçтерет.

Бюджета пурнăçлас тесен республикăри государство аппарачĕн, предприятисен, хуçалăх организацийĕсен ĕçне лайăхлатмалла, резервсене мобилизацилемелле, халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те перекетлĕх режимне çирĕп пăхăнмалла.

РСФСР-ăн государство бюджетне ăнăçлă тултарни Коммунистсен партийĕпе Совет Союзĕн правительстви халăх пурнăçĕн шайне малалла хăпартас тĕлĕшпе промышленноçпа ялхуçалăхне аталантарас енĕпе кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлама пулăшĕ.

Пĕр иккĕлекмелли те çук, çĕршыври рабочисем, хресченсем, интеллигенци çав задачăсене чыслăн пурнăçлĕç, партипе правительство ертсе пынипе социализмла Тăван çĕршыври мĕнпур халăхсен пурнăçне малалла хăвăрт лайăхлатса пырĕç! (Нумайччен алă çупаççĕ).

Малта пыракан колхозсенчен пример илсе, пур колхозсем те çак кунсенчех государствăна тырă парса татмалла тăвассишĕн кĕрешер!

★

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇ АВГУСТĂН 25-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырпул пухса кĕртнĕ	Комбайнсемпе вырнă	Капана хывнă	Авăн çапнă
Чурачăк	97	69	94	43
Советски	96	54	80	34
Красноармейски	96	56	78	39
Муркаш	96	67	74	35
Елчĕк	95	81	69	45
Комсомольски	94	54	70	46
Шăхасан	93	57	73	45
Первомайски	93	54	76	54
Элĕк	93	58	74	37
Чкаловски	91	55	65	48
Калинино	91	68	76	29
Кувакино	91	91	90	89
Йĕпреç	90	90	100	57
Вăрмар	90	54	73	39
Ишлей	90	58	64	46
Сĕнтĕр	89	63	74	47
Шупашкар	89	59	65	41
Çĕрпÿ	89	66	68	43
Етĕрне	89	80	100	65
Вăрнар	89	58	70	40
Хĕрлĕ Чутай	88	94	100	44
Октябрьски	85	61	59	36
Шăмăршă	85	63	68	52
Канаш	84	75	63	42
Сĕмĕрле	84	55	86	49
Тăвай	83	45	52	42
Сĕнтĕрвăрри	82	47	54	37
Куславкка	80	61	49	41
Пăрачкав	76	72	69	77
Улатăр	73	68	100	80

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи РАЙОНСЕМ КĔРХИ ТЫРĂСЕМ АКМАЛЛИ ПЛАНА АВГУСТĂН 25-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Мĕн пурĕ акнă	Тулă акнă	Кĕрхи çĕртме тунă
Кувакино	96	118	12
Шăмăршă	94	64	8
Чкаловски	94	43	11
Тăвай	94	100	1
Елчĕк	93	32	1
Канаш	93	104	2
Çĕрпÿ	93	53	8
Йĕпреç	93	81	4
Красноармейски	93	51	10
Калинино	93	57	4
Чурачăк	93	88	14
Шăхасан	92	70	8
Муркаш	92	47	6
Шупашкар	92	55	7
Элĕк	91	49	13
Комсомольски	91	92	9
Ишлей	91	81	8
Сĕнтĕр	91	62	6
Вăрнар	90	72	13
Первомайски	90	104	6
Сĕмĕрле	90	107	4
Октябрьски	89	50	7
Улатăр	88	115	10
Хĕрлĕ Чутай	87	77	15
Советски	87	48	19
Вăрмар	86	48	10
Пăрачкав	83	34	10
Етĕрне	79	20	1
Куславкка	77	66	3
Сĕнтĕрвăрри	75	37	—

Итем çинчи йĕркесĕрлĕхе пĕтермелле

ЕТĔРНЕ. Тимирязев ячĕпе тăракан колхозăн пилĕк итемĕнче те тырă кăшăлĕсем авăн çапма пуçланăранпах лараççĕ.

Осипова весовщица тырă мĕн чухлĕ тухнине калаçа пама пултараймасть.

Колхоз председателĕ Сергеев тата МТС-ăн участокри агрономĕ Чернова юлташсем уй-хиртен килекен тырра тĕрĕс, çиййĕнчех шута илессине организацилемеççĕ. Комбайнсенчен тухакан тырра итем çине турттараççĕ те виçмесĕрех тăкаççĕ. Колхозăн икĕ итемĕ çинче тарасасем çук.

Çапнă тырра итем çинче хăвăртрах тасатса складсене ярас ĕç те колхозра япăх пулса пырать.

Григорьев юлташ ертсе пыракан бригадăра çурхи тулăна комбайнран уй-хирех тăкса хăварнисем те пулнă. Козлов весовщик тырра склада янă чухне виçнĕ хыççăн накладнойсем çырман.

Çак йĕркесĕрлĕхсем çинчен районти органсен руководителĕсем те пĕлеççĕ. Анчах та çапнă тырра тĕрĕс шута илес енĕпе кирлĕ ĕçе тумаççĕ.

А. ОХАНДЕРОВ, Б. ТИМОФЕЕВ, Т. ЯРАНДАЙКИН.

★

Государствăна—тырă

ÇĔРПУ. Хрущев ячĕпе тăракан ялхуçалăх артель членĕсем кăçал уйри тырпула ĕç планĕнче кăтартнинчен 4—5 кун маларах вырса пĕтерчĕç. Çавăн пекех кĕрхи тырăсене те чи лайăх вăхăтра, агротехника кăтартнă пек, пысăк пахалăхпа акса хăварчĕç. Колхоз кăçал пурĕ 203 гектар çине кĕртыррисем акнă. 155 гектар çине хĕреслĕ майпа акса хăварнă.

Халĕ пур бригадăсен итемĕсем çинче те хĕрÿллĕ ĕç пырать. Кунĕн-çĕрĕн авăн çапса хатĕрлев пунктне тырă ăсатаççĕ. Кăçал И. Андреев ертсе пыракан уй-хир бригади уйрăмах пысăк çитĕнÿсем тăвать. Бригада иртнĕ çулта кĕрхи тырăсем кашни гектартан 11—12-шер центнер пухса илнĕ пулсан, кăçал вара 21—22-шер центнер пухса илнĕ. И. Андреев, Е. Кузьмин ертсе пыракан бригадăсем уйран кĕлте турттарса пĕтерчĕç.

Авăн çапнă çĕрте электричество вăйĕпе пĕр молотилка, лашапа ĕçлемелли икĕ молотилка тата «МК-1100» молотилка ĕçлеççĕ. Тырă чĕрĕ пулсан типĕтме колхозăн 2 типовăй сушилка пур.

Хатĕрлев пунктне тырă леçнĕ çĕрте колхозăн 3 автомашини ĕçлет. Машинăсем çине тырă тиеме тата пушатма комсомолецсемпе çамрăксенчен бригада организациленĕ, ăна хастарлă комсомолец Рафаил Никифоров ертсе пырать. Бригада государствăна тырă памалли плана сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕ.

В. АЛЕКСЕЕВ.

★

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи РАЙОНСЕМ ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАМАЛЛИ ТАТА ВĂРЛĂХ ФОНЧĔ ХЫВМАЛЛИ ПЛАНА МĔНЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
Августăн 25-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырă памалли плана тултарнă	Вăрлăх фончĕ хывнă
Шупашкар	95	23
Ишлей	88	25
Етĕрне	85	54
Шăхасан	83	41
Муркаш	82	28
Тăвай	77	30
Пăрачкав	75	36
Кувакино	71	46
Улатăр	70	51
Елчĕк	70	56
Канаш	68	24
Чурачăк	64	46
Вăрмар	62	27
Куславкка	61	14
Калинино	61	20
Йĕпреç	61	33
Красноармейски	60	26
Çĕрпÿ	60	26
Чкаловски	58	32
Комсомольски	57	39
Сĕнтĕрвăрри	57	26
Шăмăршă	55	39
Советски	55	18
Сĕнтĕр	55	38
Хĕрлĕ Чутай	54	19
Сĕмĕрле	52	24
Октябрьски	52	22
Вăрнар	50	30
Элĕк	50	27
Первомайски	48	41

Пĕр уйăх маларах

ИШЛЕЙ, августăн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă решенисемпе хавхаланса, районти колхозниксем кăçал государствăна тырă хатĕрлесе памалли плана малтан палăртнинчен пĕр уйăх маларах, сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма пулчĕç. Тырпул пухса кĕртес тата авăн çапас ĕçсене кунтан-кун вăйлатса пынипе паянхи куна районти 10 колхоз государствăна тырă парса татрĕç.

Н. ОРЛОВ. (Хамăр корр.).

* * *

ЧУРАЧĂК. Метикасси ял Советĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз ĕçчен ĕсем государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Колхоз августăн 24-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татрĕ.

Колхоз государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлесе памалли çулталăкри плана та августăн 24-мĕшĕ тĕлне 100 процентчĕпех тултарчĕ.

М. ЛАНДЫШ.

Механизаторсен ĕçри хастарлăхĕ

ПЕРВОМАЙСКИ. августăн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн решенийĕсем, сессире СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ каланă сăмах районти механизаторсене ялхуçалăхĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарчĕç. Партипе правительство ĕçхалăхĕн пурнăçне лайăхлатассишĕн куллен тăрăшни çине ответлесе, механизаторсем ялхуçалăхĕнче пысăкрах тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. И. Максимов юлташ ертсе пыракан трактор бригади кĕрхи тырăсем акмалли плана районта чи малтан тултарчĕ. Бригада «Красный флот» колхозра 80 гектар, «Большевик» колхозра 40 гектар кĕрхи çĕртме турĕ, çав вăхăтрах тырпул пухса кĕртес тата авăн çапас ĕçсене те хăвăрт туса пырать.

Механизаторсем пулăшнипе районти нумай колхозсем кĕрхи тырăсене вăхăтра, лайăх акса хăварчĕç. Августăн 25-мĕшĕ тĕлне районти 23 колхозран 17-шĕ кĕраки планне тултарчĕç. Кĕракинче уйрăмах «Красный флот», «Путь коммунизма», Мичурин ячĕпе, Шверник ячĕпе тăракан, «Путь социализма» колхозсенчи колхозниксемпе механизаторсем лайăх ĕçлерĕç. «Путь социализма» колхозра МТС механизаторĕсем пурĕ 401 гектар тырă акрĕç, вăл шутра 142 гектар çине ыраш, 30 гектар çине кĕрхи тулă трактор сеялкипе ансăр ретлĕ майпа акса хăварнă.

Халĕ трактористсем чылайăшĕ кĕрхи çĕртме тунă çĕрте ĕçлеççĕ. В. Маркиданов юлташ ертсе пыракан трактор бригади кăçал пурĕ 270 гектар кĕрхи çĕртме сухи тумалла. Паянхи куна бригада «Путь социализма» колхозра 120 гектар сухаланă.

Ф. Смирнов юлташ ертсе пыракан трактор бригадинчи механизаторсем Маленков ячĕпе тăракан пысăк колхозăн уй-хирĕнче ĕçлеççĕ. Вĕсем тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри задание 81 процент пурнăçланă, хальхи вăхăтра тырпула пухса кĕртсе пĕтерессишĕн пĕтĕм вăйпа тăрăшаççĕ. И. Васильев тата П. Макаров комбайнерсем «С-4» тата «Коммунар» комбайнсемпе куллен 12—14-шар гектар тырă вырса пуçтараççĕ. «У-2» трактортан волокуша кăкарса, И. Мешков тракторист комбайнсем ĕçленĕ уй-хирте улăм пуçтарать.

Комсомолец Г. Сахаров «ДТ-34» тракторпа ĕçлемелли сезонти задание 88,5 процент тултарнă.

Маленков ячĕпе тăракан колхозăн итемĕ çинче кăнтăрла та, каçхине те хĕрÿллĕн ĕçлеççĕ. «МК-1100» молотилкăпа кунта машинист Малов юлташ ĕçлет. Вăл авăн çапма тытăннăранпа 150 тонна тырă çапнă ĕнтĕ, пултаруллă машинист сменăра 21-шер тонна тырă çапса задание куллен 175 процент тултарать.

А. ТУКМАКОВ.

Молотилка машинисчĕсен ăмăртăвĕ

Авăн çапас ĕçре малта пыракансем
(августăн 20-мĕшĕ тĕлне)

Йышăннă вырăн	Машинистсен хушамачĕсем	МТС-сем	Молотилка марки	Тырă çапнă (тоннăпа)
1.	Д. Вязова	Муркаш	МС-1100	300
2.	Н. Субботин	Хĕрлĕ Чутай	МК-1100	300
3.	В. Наташкин	Чкаловски	МК-1100	300
4.	М. Иванов	Элĕк	МС-1100	270
5.	Н. Петров	Етĕрне	МК-1100	270
6.	Г. Матвеев	Шăхасан	МК-1100	270
7.	П. Нестеров	Сĕнтĕр	МС-1100	240
8.	Ф. Аристархов	Элĕк	МК-1100	238
9.	В. Тарасов	Етĕрне	МК-1100	235
10.	Р. Спиридонов	Канаш	МК-1100	230
11.	И. Сергеев	Советски	МК-1100	229

Ă м ă р т у в ă й ĕ

СОВЕТСКИ. Свердлов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă туса ирттереççĕ. Пуринчен малта 6-мĕш уй-хир бригади пырать. Ку бригада августăн 20-мĕшĕ тĕлне кĕрхи тырăсем акса пĕтерчĕ. Кĕлтесене пĕтĕмпех итем çине турттарса капана хывнă. Бригада членĕсем 4-мĕшпе 5-мĕш бригадăсемпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăрту итогĕсене колхозниксене пĕлтерсех тăраççĕ.

Социализмла ăмăртăва хутшăнса, ытти бригадăсенчи колхозниксем те хастарлă ĕçлеççĕ.

Тырпул пухса кĕртес ĕçре МТС пысăк пулăшу парать. Чылай пысăк лаптăк çинчи сурт ыррине комбайнпа вырнă. Н. Захаров комбайнер талăкра 20—30 гектар тырă вырчĕ.

Колхоз ĕçченĕсен хастарлăхне çĕклеме агитацилле-массăлла ĕçе лайăх туса пыни нумай пулăшать. Агитаторсем СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн решенийĕсене тата СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ сессире каланă сăмаха колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах колхозри парторганизаци секретарĕ В. Тимофеев, коммунист-агитаторсем П. Федоров, С. Гаврилов, В. Прокопьев, Г. Егоров юлташсем пысăк тимлĕхпе ĕçлеççĕ.

Колхозра туса тăракан стена хаçачĕсем çитменлĕхсене сивĕччĕн критиклеççĕ, малта пыракансен ĕç опытне ытти сем хушшинче сарма тăрăшаççĕ. Çакă вăл ĕçре çитĕнÿсем тума май парать.

Н. Крылов комсомолец ертсе пыракан транспорт бригади кулленхи ĕçре хăйĕн хастарлăхне кăтартать. Бригада членĕсем государствăна тырă памалли плана срокчен тултарма тăрăшаççĕ. Транспорт бригадинче 25 лав тата пĕр автомашина. Колхоз государствăна ыраш парса татрĕ. Халĕ тулă, пăрса, хуратул леçеççĕ. Государствăна тырă панипе пĕр вăхăтрах, килес çул валли пысăк пахалăхлă вăрлăх хывса хăварас ĕç те хĕрÿллĕн пулса пырать.

Свердлов ячĕпе тăракан колхоз кÿршĕри Шверник ячĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлет. Ăмăрту итогĕсем кăтартса панă тăрăх, тырпул пухса кĕртес ĕçре Свердлов ячĕпе тăракан колхоз малта пырать.

А. ЛУКИН.

Совет Правительствипе Демократиллӗ Германи Республикин Правительство делегацийӗ хушшинче пулнӑ калаҫусен итогӗсем ҫинчен урӑх ҫӗршывсенче мӗн ҫыраҫҫӗ

Нумай ҫӗршывсенчи анлӑ общественность Совет Правительствипе Демократиллӗ Германи Республикин Правительство делегацийӗ хушшинче пулнӑ калаҫусен итогӗсене, СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗ Г. М. Маленков августӑн 22-мӗшӗнче каланӑ сӑмаха тулли кӑмӑлпа ырласа кӗтсе илнӗ. Мускавра калаҫусем ирттернипе йышӑннӑ политикӑлла тата экономикӑлла решенисене нумай хаҫатсем питех те пысӑк пӗлтерӗшлӗ ӗҫсем тесе хаклаҫҫӗ. Ҫав решенисене вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи тапхӑрти чи кӑткӑс ыйтусенчен пӗрне—Германи проблемине мирлӗн йӗркелес ыйтӑва татса парас, нимӗҫ халӑхне мирлӗ аталанмалли тата хӑйӗн нациллӗ шухӑш-ӗмӗчӗсене пурнӑҫламалли ҫул ҫине ҫирӗп тӑма пулӑшас шутпа йышӑннӑ.

Совет Союзӗпе Германи хушшинчи калаҫусен результачӗсене нимӗҫ халӑхӗ хытӑ хавасланса кӗтсе илнӗ. Германири нумай хаҫатсем калаҫусем ҫинчен ҫырнӑ пур материалсене те пичетленӗ тата ҫав документсем пирки общественность мӗн калани ҫинчен нумай ҫыраҫҫӗ.

«Нейес Дейчланд» хаҫат «Мирлӗ, ӗҫлесе пурӑнакан тата демократиллӗ Германишӗн» ятлӑ умстатьяра Совет Правительствипе Демократиллӗ Германи Республикин Правительство делегацийӗ хушшинчи калаҫусем Германишӗн мирлӗ пурнӑҫ тата ҫӗршыв пӗрлӗхне туса хурас ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине палӑртать.

«Калаҫусем ирттернӗ хыҫҫӑн Демократиллӗ Германи Республикин Правительство делегацийӗ пӗтӗм нимӗҫ халӑхӗшӗн усӑллӑ пысӑк ҫитӗнӳсем туса таврӑнчӗ. Урӑх ҫӗршывсенче калаҫусем пулнӑ хыҫҫӑн делегаци ҫавӑн пек пысӑк ҫитӗнӳсемпе таврӑнни Германи историйӗнче халиччен пулман-ха,—тесе ҫырать хаҫат. — Туслӑн, кӑмӑллӑн тата пӗр-пӗрне ӑнланса калаҫнӑ май, пӗтӗм Германие тивекен питӗ пысӑк ыйтусем тӑрӑх пӗтӗмпех калаҫса татӑлнӑ. Ку ыйтусем пирӗн халӑх пурнӑҫӗшӗн питӗ кирлӗ ыйтусем пулса тӑраҫҫӗ, кунта Германипе мирлӗ договор тӑвасси ҫинчен тата пирӗн тӑван ҫӗршывӑн нациллӗ пӗрлӗхне ҫӗнӗрен туса хурасси ҫинчен сӑмах пырать».

Хаҫат малалла ҫапла ҫырать: «Гитлерла вӑрҫӑ пӗтнӗренпе 8 ҫул иртнӗ хыҫҫӑн та Германин мирлӗ договор ҫук-ха. Ҫакӑншӑн тӗп ответа Аденауэр тытма тивӗҫлӗ, мӗншӗн тесен вӑл миртен тата килӗшӳ тӑвассинчен питех те хытӑ хӑрать. Мир тата килӗшӳ туни унӑн вӑрҫӑ хатӗрлес политики тата унӑн халӑха хирӗҫле режимӗ путланса ларассине пӗлтерет. Ҫакна Аденауэр пӗлет».

СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗ Г. М. Маленков каланӑ сӑмахран ҫак вырӑна—«халӗ ыйту ҫапла тӑрать: Германи е Европӑра мирпе хӑрушсӑрлӑха тӗреклетес ӗҫре пысӑк факторсенчен пӗри пулса тӑма, е ҫӗнӗ агрессин Европӑри тӗп вучахӗ пулса тӑма пултарать» тенӗ вырӑна илсе, хаҫат ҫапла ҫырать: «Халӗ, нимӗҫ халӑхӗ хӑйӗн умӗнче выртакан икӗ ҫултан хӑшӗ ӑҫта илсе пынине уҫҫӑн курнӑ вӑхӑтра, килӗҫӳ тутарассишӗн тата мирлӗ договор тутарассишӗн кӗрешес ӗҫе анлӑ сарма пур майсемпе те тӑрӑшас пулать. Ҫакӑ вӑл—мирпе пӗрлӗхшӗн кӗрешни пирӗн хамӑрӑн интерессемшӗн кӑна мар, Европӑри мӗнпур халӑхсен интересӗсемшӗн те кӗрешнине пӗлтерет».

Нимӗҫсен ирӗклӗ профсоюзӗсен «Трибюне» хаҫачӗ Совет Союзӗпе Демократиллӗ Германи Республики хушшинчи калаҫусем хыҫҫӑн пичетленӗ документсене «Совет Правительстви туслӑ пурӑнма тӑрӑшнине лайӑх кӑтартакан тӗслӗх» тесе хаклать. «Форвертс» хаҫат ҫав документсене «Германипе Совет Союзӗ хушшинче Мускавра пулнӑ калаҫусен чаплӑ результачӗсем» текен заголовокпа пичетлет.

Совет Правительстви Германин вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи финанспа экономикӑлла обязательствисене ҫӑмӑллатма йышӑннӑ пирки Германи халӑхӗн мӗнпур сийӗсем те хӑйӗн шухӑшне каласа параҫҫӗ.

Хӗвеланӑҫ Берлинри «Монтаг-Морген» хаҫат: Совет Союзӗпе Польша 1954 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен Демократиллӗ Германи Республикинчен репарацисем илме чарӑнаҫҫӗ, совет акционерлӑ обществисен предприятийӗсене каялла таврӑса параҫҫӗ, вӗсем пӗтӗмпе 2,7 миллиард марка тӑраҫҫӗ, оккупаци расхочӗсене чакараҫҫӗ, тесе пӗлтернӗ. Юлашкинчен хаҫат СССР Демократиллӗ Германи Республикине ҫӗнӗрен хушса 590 миллион тенкӗлӗх тавар тӑратма тата 485 миллион тенкӗ кивҫен укҫа пама килӗшни ҫинчен ҫырнӑ.

Польша Правительствин заявленийӗнче ҫапла каланӑ: ССР Союзӗн Правительстви Германи ыйтӑвӗпе йышӑннӑ решенисем «Германи халӑхне хӑйӗн экономикине тӗреклетме кӑна мар, ҫавӑн пекех тата Германие ҫӗнӗрен пӗр государство—пӗрлештернӗ, демократиллӗ Германи государстви туса хума условисем хатӗрлес ӗҫре чылай пысӑк пулӑшу параҫҫӗ. Польша халӑхӗ Германирен ҫавӑн пек государство туса хурассишӗн тӑрать».

Милитаризм, агресси тата вӑрҫӑ ҫулӗ Германишӗн наци тӗлӗшӗнчен хӑйне валли хӑй вилӗм ҫулӗ хатӗрлени пулнине истори кӑтартса пани ҫинчен хаҫатсем уйрӑмах нумай ҫыраҫҫӗ. Халӑха ҫав ҫул ҫине Аденауэрӑн милитаристла тата реваншистла ушкӑнӗ тӑратасшӑн.

Польшӑри «Трибуна люду» хаҫат ҫапла ҫырать: «Англипе Америка империалисчӗсем, Аденауэр ҫине таянса, Хӗвеланӑҫ Германие милитаризм, ревизионизм тата реваншизм вучахӗ, Польшӑна хирӗҫ тата Совет Союзне хирӗҫ кӗрешмелли вырӑн, ҫӗнӗ вӑрҫӑ вучахӗ туса хума хытӑ тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫав тӗллевпе вӗсем Германи пайланса тӑнине ҫаплипех хӑвараҫҫӗ тата Германи пайланса тӑнине ҫирӗплетме хӑтланаҫҫӗ».

Совет Союзӗн Германи ыйтӑвӗпе тытса пыракан мирлӗ политикине мӗнпур халӑхсем хӗрӳллӗн ырлаҫҫӗ. Чехословакири «Руде право» хаҫат «Совет Союзӗ—пӗтӗм нимӗҫ халӑхӗн чи лайӑх тусӗ» ятлӑ умстатьяра ҫапла ҫырать: «Мускаври калаҫусем туслӑн, пӗр-пӗрне лайӑх ӑнланса иннипе пулса иртнӗ. Калаҫу итогӗсем вӗсем историри паллӑ событи пулса тӑраҫҫӗ. Демократиллӗ Германи Республикине пур енчен те пулӑшса пырса, Совет Союзӗ пӗтӗм Германири мире юратакан вӑйсен тӗрекне ҫирӗплетет».

Болгарири «Отечествен фронт» хаҫат «Европӑри тата пӗтӗм тӗнчери мир интересӗсемшӗн» ятлӑ умстатьяра ҫапла ҫырать:

«Германин нациллӗ пӗрлӗхне ҫӗнӗрен туса хурас тата демократиллӗ, мире юратакан государство туса хурас ӗҫре Демократиллӗ Германи Республики историллӗ вырӑн йышӑнса тӑмалла. Мускаври калаҫусен результачӗсем Демократиллӗ Германи Республикине тата ытларах тӗреклетеҫҫӗ, унти халӑхӑн пурнӑҫне лайӑхлатма пулӑшаҫҫӗ, ҫав халӑх Германи пӗрлӗхне хытӑ хӳтӗлесе тӑрӗ».

Мускаври калаҫусем вӑхӑтӗнче йышӑннӑ решенисене Германи милитаризмӗнчен инкек курнӑ халӑхсем мирпе хӑрушсӑрлӑха хӳтӗлемелли шанчӑк тесе шутлаҫҫӗ.

Чехословакири «Руде право» хаҫат ҫапла ҫырать: «Совет Правительстви тӳрӗ кӑмӑлпа тӑрӑшса тунӑ ҫӗнтерӳ, Германипе хӑвӑртрах мирлӗ договор тутарас тӗлӗшпе тӑрӑшса тунӑ ҫӗнтерӳ, пирӗн республикӑн чиккисене никам тапӑнмалла мар йӗрке туса хума пулӑшнине пирӗн халӑх лайӑх пӗлет. Ҫакӑ вара пирӗн ҫӗршывра социализм тӑвас ӗҫшӗн хӑрушсӑрлӑх тата пирӗн хӗвеланӑҫӗнчи чикӗсемшӗн хӑрушсӑрлӑх туса хунине пӗлтерӗччӗ. Ҫавӑнпа та Мускаври калаҫусен результачӗсем пӗтӗмпех пирӗн халӑхӑн шухӑш-ӗмӗчӗсемпе килӗшсе тӑраҫҫӗ».

Венгрири «Сабад неп» хаҫат калаҫусен итогӗсем ҫинчен ҫырнӑ умстатьяна «Мирлӗ пурнӑҫ тумалли ҫӗнтерӳллӗ ҫул» тесе ят панӑ. Хаҫат «Мускаври калаҫусем вӑхӑтӗнче тунӑ килӗшӳсем, Совет Союзӗ Демократиллӗ Германи Республикине ӑшӑ кӑмӑлпа пулӑшни—ҫаксем пурте Германие мирпе демократи тата нациллӗ пӗрлӗхӗн ҫулӗ ҫине тӑма пулӑшас тӗлӗшпе тунӑ ӗҫсем» пулнине палӑртать.

Иртнӗ вӑрҫӑра хӑйсене парӑнтарнӑшӑн тавӑрма тӑрӑшакансем Хӗвеланӑҫ Германире, Аденауэр пуҫ пулса ертсе пынипе, ирсӗр ӗҫсем туни ҫинчен аса илтерсе, «Юманите» хаҫат ҫапла ҫырать: «Ҫавӑн пек условисенче Совет Правительстви хӑйне ҫирӗп тытать, нимӗҫ халӑхне пулӑшать. Франци правительстви хамӑр ҫӗршывӑн интересӗсемшӗн мӗн чухлӗ те пулин тӑрӑшать пулсан, унӑн ҫавӑн пек тумалла та ӗнтӗ...

Пирӗн ҫӗршыва Атлантика блокне пӑхӑнтарни, Германин фашистла ҫарне хӗҫпӑшаллантарни тата Германи пайланса тӑнине ҫаплипех хӑварни хӑрушлӑха ӳстереҫҫӗ, Германи ҫӗнӗ агрессин Европӑри тӗп вучахӗ пулмалли ҫул ҫине тӑрас хӑрушлӑха ӳстереҫҫӗ. Аденауэр хӗреслӗ поход тума ӗмӗтленет пулсан, Боннипе Парижри договорсем французсене ҫав похода хутшӑнтарасси патне илсе пыма пултараҫҫӗ. ССР Союзӗн сӗнӗвӗсене йышӑнни вара мирлӗ пурнӑҫӑн ҫӗнӗ самани пуҫланни пулӗччӗ».

Китайри «Гунженьжибао» хаҫат «Германи ыйтӑвне мирлӗн йӗркелеме пулӑшакан пысӑк ӗҫсем» ятлӑ статьяра Мускавра ирттернӗ калаҫусем Европӑри миршӗн тата совет халӑхӗпе нимӗҫ халӑхӗ хушшинчи туслӑха малалла аталантарас ӗҫшӗн питех те пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнине палӑртать.

«Германи ыйтӑвне татса пани тата Германире милитаризм ҫӗнӗрен ҫӗкленессине чарса лартни,—тесе ҫырать хаҫат, — Германие Европӑри мӗнпур ҫӗршывсен халӑхӗсен ӗмӗчӗ пулса тӑрать. Германи ыйтӑвне Европӑра тата пӗтӗм тӗнчере хӑрушсӑрлӑх туса хурассипе ҫыхӑнтарса, мире юратакан халӑхсем ҫӗнӗ вӑрҫӑ пуҫлама парас мар тесе ӑнӑҫлӑ кӗрешеҫҫӗ, вӗсем Германипе мирлӗ договор тума тата пӗрлӗхлӗ, никама пӑхӑнман, демократиллӗ тата мире юратакан Германи туса хума ыйтаҫҫӗ».

Буржуалла хаҫатсем, сӑмахран, Хӗвеланӑҫ Германири влаҫра тӑракансен хаҫачӗсем, калаҫусен итогӗсене анлӑ общественноҫран пытарса тӑма хӑтланаҫҫӗ. Буржуалла хаҫатсем калаҫусен итогӗн чӑнчӗн шухӑшне пӑсма хӑтланаҫҫӗ, ҫав итогсем Германи ыйтӑвне мирлӗн тата демократиллӗ йӗркепе татса парас ӗҫре, Европӑри тата пӗтӗм тӗнчери мир ӗҫӗнче пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине пӗлтересшӗн мар. Общественноҫа улталама хытӑ тӑрӑшса, Атлантика блокӗнчи ҫӗршывсен реакциллӗ хаҫачӗсем Мускаври калаҫусем вӑхӑтӗнче йышӑннӑ решенисене пропаганда тӗллевӗпе кӑна йышӑннӑ пек кӑтартма хӑтланаҫҫӗ. Сӑмахран, ҫав решенисене Хӗвеланӑҫ Германири суйлав результачӗсем ҫине влияни парас тӗллевпе кӑна йышӑннӑ пек кӑтартма хӑтланаҫҫӗ.

Анчах буржуалла хаҫатсем хӗвеланӑҫӗнчи державӑсен Германи ыйтӑвӗ тӗлӗшпе позицисем начар пулнине пытарса тӑма пултараймаҫҫӗ.

Г. М. Маленков августӑн 22-мӗшӗнче каланӑ сӑмах пирки Нью-Йоркри «Уолл-стрит джорнэл» хаҫат редакци ҫырнӑ статьяна пичетленӗ. Унта вӑл ҫапла ҫырать: «Германишӗн пыракан кӗрешӗвӗн пӗлтерӗшне Маленков питӗ лайӑх кӑтартса пачӗ, ҫав пӗлтерӗше унтан лайӑхрах кӑтартса пама май та ҫук пулӗ... Эпир татӑклӑ мар тата иккӗленекен политика тытса пыратпӑр, ҫав политикӑна хирӗҫ калама Маленков уҫҫӑнах палӑрса тӑракан сӑлтава тупрӗ».

Совет правительстви Демократиллӗ Германи Республикине пӗр тӳлевсӗрех 33 предприяти пама, унтан репарацисем илме пӑрахма йышӑннине палӑртса, хаҫат ҫав решенисене—Демократиллӗ Германи Республикин халӑх хуҫалӑхне малалла аталантарма тата унӑн халӑхӗн пурнӑҫне лайӑхлатма пулӑшакан решенисене—хак парасран пӑрӑнать.

Империалистсен пропаганди Совет Союзӗ ҫинчен вӑл «агрессиллӗ» ҫӗршыв тесе яланах элеклет пулсан, хаҫат та ҫавӑн пекех калать. Анчах, ҫав вӑхӑтрах, хаҫат США Германие тата ытларах пайлас политика тытса пынине йышӑнмасӑр тӑма пултараймасть. Хаҫат ҫапла ҫырать:

«Германи ыйтӑвӗ тӗлӗшпе эпир тытса пыракан политикӑн пӗр питӗ хавшак вырӑнӗнчен ҫапса, Кремль чее хӑтланать. Пирӗн политика Германие пайланипех хӑварас шухӑш ҫинче никӗсленсе тӑни уҫҫӑнах паллӑ. Эпир халиччен пур ӗҫсене те ҫав шухӑша пурнӑҫлас шутпа турӑмӑр, малашнехи ӗҫсене те ҫав тӗллевпе туса пыма хатӗрленетпӗр. Официальнӑй заявленисенче эпир Германи хӑҫан та пулин пӗрлешессине шанса тӑни ҫинчен пӗлтеретпӗр, анчах чӑннипе эпир ҫавна хирӗҫле ӗҫсем тӑватпӑр, ҫакна нимӗҫсем хӑйсем те пӗлеҫҫӗ. Шӑпах та нимӗҫсемшӗн пысӑк пӗлтерӗшлӗ ҫав сӑлтава вырӑссем пире хирӗҫ кӑларса тӑратрӗҫ».

Мускавра тунӑ килӗшӗве нимӗҫ халӑхӗн анлӑ сийӗсем тата урӑх ҫӗршывсенчи малта пыракан общественность ырланине буржуалла хаҫатсен ирӗксӗрех йышӑнма тивет. Асӑннӑ килӗшӳсем Германи ыйтӑвне татса пама пулӑшнине вӗсем ирӗксӗрех йышӑнаҫҫӗ.

ССР Союзӗпе Демократиллӗ Германи Республики хушшинчи калаҫусен итогӗсен пӗлтерӗшне хак парса, Хӗвеланӑҫ Германири «Франкфуртер рундшау» хаҫат августӑн 24-мӗшӗнче «Хӗвеланӑҫпе Хӗвелтухӑҫ хушшинче калаҫусем пуҫланас вӑхӑт ҫитет», тесе ҫырнӑ. «Вестдейче нейе прессе» хаҫат та ҫавӑн пек требовани кӑларса тӑратнӑ. Кам ҫавӑн пек калаҫусем ирттерме питех те кирлине йышӑнмасть, тет хаҫат, «ҫав ҫынна, ку ӗҫ ҫине шанмасӑр пӑхасси унӑн тӗллевӗ пулса тӑрать тесе, айӑплама пулать пулӗ, ӑна ҫавӑн пек айӑплама сӑлтав пур».

Совет правительствипе Демократиллӗ Германи Республикин Правительство делегацийӗ хушшинче Мускавра пулнӑ калаҫусем вӑхӑтӗнче тунӑ килӗшӳ пирки Америкӑри влаҫра тӑракан ушкӑнсем аптраса ӳкнӗ. Ҫакӑ вӑл Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчӗ пӗлтернинчен курӑнать. Германин финанспа экономика тӗлӗшӗнчи обязательствисене ҫӑмӑллатакан решенисем пирки Америкӑри влаҫра тӑракан ушкӑнсем хӑйсен шухӑшне каласа пама килӗшмеҫҫӗ.

«Америкӑри официальнӑй ҫынсен шучӗпе,—тесе ҫырать корреспондент.—ҫав килӗшӗве тума Хӗвеланӑҫ Германире суйлав пулас умӗнхи вӑхӑта суйласа илнӗ, ҫав килӗшӗве туни вӑл Хӗвеланӑҫ Германири суйлав результачӗсене вӗсемшӗн усӑллӑ пулмалла тӑвас тӗлӗшпе пуҫарнӑ ҫӗнӗ кампани пулса тӑрать».

Англири хаҫатсем Совет Союзӗпе Демократиллӗ Германи Республики хушшинчи калаҫусен итогӗсене анлӑ сутатаҫҫӗ. Буржуалла хаҫатсем Мускаври решенисене Хӗвеланӑҫ Германире ҫывӑх вӑхӑтра пулмалли суйлавра Аденауэра намӑслантарас шутпа тунӑ маневр пек ҫеҫ кӑтартма хӑтланаҫҫӗ. Анчах ҫав сӑмахсене юриех шухӑшласа кӑларнине хаҫатсем хӑйсемех тӑрӑ шыв ҫине кӑлараҫҫӗ.

Ҫапла, «Таймс» хаҫатӑн дипломати ӗҫӗсене сутатакан обозревателӗ, Мускаври калаҫусен итогӗсем ҫинчен усал сӑмахсем ҫырса тултарса, ирӗксӗрех ҫапла калать: «Ҫак килӗшӳрен Хӗвелтухӑҫ Германи сахал мар усӑ илессине пытарса тӑма ҫук».

«Нью-кроникл» хаҫатӑн дипломати ӗҫӗсене сутатакан обозревателӗ Бартлетт та «Таймс» корреспонденчӗ пекех калать. Мускавра ҫырса алӑ пуснӑ протоколта экономикӑпа финанс енӗпе тума йышӑннӑ ӗҫсем Демократиллӗ Германи Республикинчи халӑх пурнӑҫне лайӑхлатма пулӑшасси ҫинчен Бартлетт та ҫырать.

«Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаҫат хӑйӗн Мускаври корреспонденчӗ Даунтон пӗлтернине пичетлесе кӑларнӑ. «Хӗвеланӑҫӗнчи ҫӗршывсен Мускаври дипломачӗсем ҫак утӑм Хӗвеланӑҫ Германири анлӑ массӑсене тарӑн шухӑша ярассине, вӗсен шухӑшне урӑхлатассине хак памасӑр тӑма ҫуккине палӑртаҫҫӗ», тесе ҫырать вӑл.

Атлантика блокӗн политики хӗвеланӑҫӗнчи державӑсене йывӑрлӑха кӗртсе ӳкерет. Буржуалла хӑшпӗр хаҫатсем ҫак йывӑрлӑхран тухмалли ҫула тупма хӑтланаҫҫӗ. «Йоркшир пост» хаҫатӑн политикӑлла ӗҫсене сутатакан обозревателӗ, Совет Союзӗпе Германи пӗлтернине хӗвеланӑҫӗнчи ҫӗршывсен столицисенче тӗплӗн вӗренни ҫинчен пӗлтерсе, ҫапла ҫырать: «Совет Союзӗ нумай пулмасть панӑ нотӑсене хирӗҫ ответлес тӗллевпе хӗвеланӑҫӗнчи державӑсем хатӗрленӗ ҫӗнӗ сӗнӳсене ҫак эрне вӗҫӗнче пулнӑ событисене шута илсе тепӗр хут тӗпчесе вӗренес пулать». (ТАСС).

Демократиллӗ Германи Республикин Халӑх палати пӗлтерни

БЕРЛИН, августӑн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Халӑх [illegible] палата пӗлтерне йышӑннӑ. Унта ҫапла каланӑ:

«Премьер-Министр Отто Гротеволь тата СССР Правительстви чӗннипе 1953 ҫулхи августӑн 20—22-мӗшӗсенче Мускавра пулнӑ Правительство делегацийӗн ытти членӗсем тунӑ доклада Демократиллӗ Германи Республикин Халӑх палати пысӑк савӑнӑҫпа тата кӑмӑлласа кӗтсе илчӗ. Унта Демократиллӗ Германи Республикине экономика енӗпе пысӑк пулӑшу парасси ҫинчен СССР Правительствипе килӗшӳ тунӑ, Совет Союзӗпе Демократиллӗ Германи Республики хушшинчи ҫыхӑнусене вӑйлатасси ҫинчен тата пӗтӗм Германи ыйтӑвӗсем тӑрӑх калаҫусем ирттернӗ.

Германи нацийӗн тӗп ыйтӑвӗсем тӗлӗшпе СССР Правительствипе Демократиллӗ Германи Республики правительстви пӗр шухӑш-кӑмӑллӑ пулнине Халӑх палати тепӗр хут пысӑк хавхаланупа палӑртать. Германи нацийӗ Германи пайланса тӑнине пӗтерессшӗн тӑрать. Вӑл пӗрлӗхлӗ, никама пӑхӑнман, демократиллӗ, мире юратакан Германи туса хурасшӑн тата ҫавӑн пек Германипе мирлӗ договор тутарасшӑн тӑрать. Ҫак тӗллевпе ҫывӑх вӑхӑтрах мирлӗ конференци пухмалла, мирлӗ договор тӑвас ӗҫре пур тапхӑрсене те тата мирлӗ конференцие те Германи представителӗсене хутшӑнтармалла. Нимӗҫсем хушшинче килӗшӳ тунипе Пӗтӗм Германин Вӑхӑтлӑх правительствине туса хумалла. Ҫав Вӑхӑтлӑх правительствӑн тӗп задачисенчен пӗри вӑл пӗтӗм Германире ирӗклӗ суйлава хатӗрлесе ирттересси пулать. Ҫав суйлава пула, пӗрлӗхлӗ, демократиллӗ мире юратакан Германин государствӑлла, обществӑлла тата экономикӑлла тытӑмӗ тӗлӗшӗнчи ыйтӑвне пирӗн халӑх хӑех, ют ҫӗршывсем хутшӑнмасӑрах, татса парать. Ҫак ыйтӑва татса парас ӗҫе капиталистла шултра монополисене (картельсене т. ыт. те) хутшӑнтармалла мар.

Ҫакӑ вӑл Германи халӑхӗн ирӗкӗ пулать. Германи халӑхӗ тӗрӗслӗхлӗ мир тӑвасшӑн, хӑйӗн пӗрлӗхӗпе ирӗкне туса хурасшӑн.

Аденауэрӑн реваншистла политики вара ҫавна хирӗҫ пырать, вӑл Бонра тата Парижра алӑ пуснӑ договорсем пулӑшнипе Хӗвеланӑҫ Германие агрессиллӗ Ҫурҫӗр Атлантика пактне хутшӑнтарасшӑн. Аденауэр политики Хӗвеланӑҫ Германие ҫӗнӗ йывӑрлӑхсем кӳрет, вӑл Хӗвеланӑҫ Германирен Америка протекторачӗ туса хурать, ҫӗнӗрен фашистла-милитаристла диктатура туса хурса, вӑрҫӑн ҫӗнӗ вучахне туса хума тӗллев тытать.

СССР Правительстви августӑн 15-мӗшӗнче панӑ нота, ҫавӑн пекех Демократиллӗ Германи Республикин Правительство делегацийӗ ирттернӗ калаҫусен результачӗсем Германие, уйрӑмах, Демократиллӗ Германи Республикине, пысӑк пулӑшу параҫҫӗ. Ку вӑл, уйрӑммӑн илсен, ҫак фактсенчен курӑнать:

а) 1954 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа Демократиллӗ Германи Республикинчен репараци илме чарӑнмалла тунӑ;

б) Совет Союзӗн акционерла обществисен 33 предприятине нимӗн тӳлевсӗрех каялла панӑ, вӗсем репараци шучӗпе СССР харпӑрлӑхне куҫнӑ пулнӑ;

в) вӑрҫӑ хыҫҫӑн оккупаци расхочӗсем тӗлӗшпе государство енӗпе Совет Союзне тӳлемелли парӑмран Германие хӑтарнӑ;

г) оккупаци расхочӗсене чакарма, ҫав расходсене Демократиллӗ Германи Республикин, ҫавӑн пекех Хӗвеланӑҫ Германири федеральнӑй республика бюджетӗнче 5 процентран ытла мар тума сӗннӗ, ҫак сӗнӗве Демократиллӗ Германи Республики тӗлӗшпе 1954 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа пурнӑҫлама тытӑнаҫҫӗ;

д) апат-ҫимӗҫ продукчӗсемпе чӗртавар ҫӗнӗрен хушса нумай панӑ.

Политикӑпа экономика енӗпе ҫакӑн пек пысӑк пулӑшу пани пирӗн халӑха хӑйӗн пурнӑҫне лайӑхлатассишӗн тата миршӗн кӗрешессине чылай вӑйлатма хушать.

СССР Правительствин ҫак сӗнӗвӗсемпе решенийӗсене 1952 ҫулхи мартӑн 10-мӗшӗнче панӑ нотӑра тата халӗ Германипе мирлӗ договор тӑвасси ҫинчен тепӗр хут [illegible] сӗнӳсене ҫирӗплетнӗ.

Ҫав сӗнӳсем пирӗн пӗтӗм нимӗҫ халӑхӗн нациллӗ интересӗсене тивӗҫтереҫҫӗ.

Гитлерла вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче айӑплӑ ӗҫсем тунӑшӑн наказани памалла тунӑ нимӗҫ ҫар ҫыннисене ирӗке кӑларасси ҫинчен Мускавра килӗшӳ туни те ҫавӑн пекех пӗтӗм Германишӗн пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулса тӑрать. Ку шута мирпе этемлӗхе хирӗҫ уйрӑмах йывӑр ӗҫсем тунӑ ҫынсем кӗмеҫҫӗ.

Демократиллӗ Германи Республикин Халӑх палати пулӑшу панӑшӑн Совет Правительствине чӗререн хӗрӳллӗн тав тӑвать, ҫав пулӑшӑва пама хатӗр тӑнине Совет Союзӗн Правительстви пӗтӗм Германие кӑтартса пачӗ. Халӑх палати тата Польша Халӑх Республикин правительствине чӗререн тав тӑвать, вӑл Германие ӳлӗмрен Польшӑна репараци укҫи тӳлессинчен хӑтарчӗ. Халӑх палати ҫавӑн пекех пӗтӗм тӗнчери мир лагерӗнчи ытти мӗнпур ҫӗршывсене те Демократиллӗ Германи Республикине халӗ таварсем ҫӗнӗрен хушса панӑшӑн тав тӑвать.

Мускаври килӗшӳсем тепӗр хут ҫакна кӑтартса параҫҫӗ: СССР Правительстви хӑйӗн мирлӗ политикине, аслӑ политикӑна, тата Германи тӗлӗшпе Германин мире юратакан тата демократиллӗ вӑйӗсене шанса тӑракан хӑйӗн политикине ҫирӗппӗн пурнӑҫласа пырать. Совет Союзӗн тулашри политикин ҫав принципӗсемех Демократиллӗ Германи Республикин халӑх хуҫалӑхне пысӑк пулӑшу панинчен те курӑнаҫҫӗ. Ҫав пулӑшу вӑл Демократиллӗ Германи Республикине таварсем нумай тата кивҫен укҫа панинче палӑрса тӑрать. Ҫавна май халӑхӑн пурнӑҫ шайне малалла чылай лайӑхлатма пулать. Кашни нимӗҫ ҫакна курса тӑрать: Демократиллӗ Германи Республикин правительстви тытса пыракан политика — Совет Союзӗпе тата пӗтӗм тӗнчери мир лагерӗнчи ытти ҫӗршывсемпе туслӑ пурӑнмалли политика, пӗртанлӑхпа туслӑх никӗсӗ ҫинче Германин мӗнпур кӳршисемпе тата тӗнчери мӗнпур халӑхсемпе туслӑ ҫыхӑнусем тытса пымалли политика, мирлӗ строительство политики тата халӑхӑн экономикӑлла пурнӑҫне лайӑхлатмалли политика — пӗтӗм нимӗҫ халӑхӗшӗн усӑллӑ. Пачах урӑхла, Аденауэр политики Гитлер политикине малалла тытса пыни пулать, ҫав политика Германие ҫӗнӗ питӗ хӑрушӑ катастрофӑна кӗртсе ӳкерессипе хӑратса тӑрать. Ҫавӑнпа та халӗ Хӗвеланӑҫ Германи ҫак задача умӗнче тӑрать: сентябрӗн 6-мӗшӗнче пулакан суйлавра Аденауэра сирпӗтсе антармалла, унӑн политикине сирсе ямалла, мирлӗ тата демократиллӗ майпа Германие пӗрлештерес тата Германипе хӑвӑртрах мирлӗ договор тӑвас тӗлӗшӗнчен пур ыйтусемпе те пӗтӗм Германире килӗшӳ тумалла.

Халӑх палатин делегацийӗ 1952 ҫулхи сентябрӗн 19-мӗшӗнче Бонри парламента сӗнӳ пачӗ, Демократиллӗ Германи Республикин Халӑх палати тата тепӗр хут хӑй Хӗвеланӑҫ Германири федеральнӑй республикӑн парламенчӗпе пӗрле Пӗтӗм Германин Вӑхӑтлӑх правительствине туса хума хатӗр тӑни ҫинчен пӗлтерет. Ҫав вӑхӑтлӑх правительство пӗтӗм Германире ирӗклӗ суйлав ирттерме пӗр тӑхтаса тӑмасӑр хатӗрлеме тивӗҫ.

Ҫак ҫул кӑна вӑл пирӗн халӑха ӗлӗкхи пек пысӑк йӑнӑшсем тӑвассинчен, юнпа куҫҫуль юхтарассинчен хӑтарма, ҫӗнӗ хӑрушӑ йӑнӑшсенчен хӑтарма тата телейлӗ малашлӑх патне илсе пыма пултарать. Ҫавӑнпа та эпир, пирӗн нумай асап тӳснӗ халӑх халех ӗнтӗ, юлашкинчен, пӗрлӗхлӗ, никама пӑхӑнман, мире юратакан, демократиллӗ Германи туса хурасси патне тата мирлӗ договор тӑвасси патне илсе пыракан ҫул ҫине тӑтӑр тесе, Хӗвелтухӑҫӗпе Хӗвеланӑҫӗнчи мӗнпур нимӗҫсене пӗтӗм вӑйпа кӗрешме чӗнетпӗр.

Демократиллӗ Германи Республикин Халӑх палати.

Берлин, 1953 ҫулхи августӑн 26-мӗшӗ.

Корейӑри ҫутӗҫ работникӗсен канашлӑвӗ

ПХЕНЬЯН, августӑн 24-мӗшӗ. (ТАСС). Пхеньянра Пӗтӗм Корейӑри ҫутӗҫ работникӗсен канашлӑвӗ пулса иртнӗ. Канашлура шкулсенче, техникумсенче, аслӑ шкулсенче вӗрентекен преподавательсем, ача ҫурчӗсенче ӗҫлекен воспитательсем пулнӑ. Халӑха вӗрентес енӗпе отечественнӑй вӑрҫӑ тапхӑрӗнче туса ирттернӗ ӗҫсен итогӗсем ҫинчен тата ҫутӗҫ работникӗсем умӗнче вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи тапхӑрта тӑракан задачӑсем ҫинчен ҫутӗҫ министрӗ Пэк Нам Ун доклад тунӑ.

Японире Китайпа суту-илӳ тӑвассине вӑйлатма ыйтаҫҫӗ

НЬЮ-ЙОРК, августӑн 24-мӗшӗ. (ТАСС). «Биснес уик» журнал ҫырнӑ тӑрӑх, «халӗхи вӑхӑтра японецсем пурте: континентпа ӗҫлӗ ҫыхӑнусем тытни Японин умне экономика тӗлӗшпе тухса тӑнӑ йывӑрлӑхсене сирсе ямалли май пулать, тесе шутлаҫҫӗ.

Америка политикине палӑртса тӑракан ҫынсемшӗн ку вӑл хӑвӑрт начарланса пыракан йывӑр ӗҫсем ҫинчен тата тепӗр хут аса илтерни пулса тӑрать. Японире американецсене хирӗҫле шухӑш ӳссе пырать. Эпир Японие коммунистла Китайпа суту-илӳ тума чарма тӑрӑшни суран ҫине тӑвар сапни кӑна пулать пулмалла».

Японире Китайпа суту-илӳ тӑвассишӗн тӑракан шухӑш «юр чӑмакки пек ӳссе пыни ҫинчен» каласа, «Биснес уик» ҫапла ҫырать: «Темиҫе уйӑх каялла Америка ҫар заказӗнчен услам илсе тӑнӑ вак предпринимательсем халӗ, ҫак заказсем сахалланнӑ хыҫҫӑн, Китайпа суту-илӳ тӑвассине вӑйлатассишӗн пыракан юхӑм пуҫӗнче тӑраҫҫӗ. Корейӑра вӑрҫӑ ӗҫӗсем чарӑннӑ май вӗсем ҫумне пысӑк хуҫасем пӗрлешме васкаҫҫӗ. Паллӑ промышленниксем Китайран пыракан ҫынсене апата чӗнеҫҫӗ, вӗсемпе Китай малашлӑхӗ ҫинчен калаҫаҫҫӗ, ҫыхӑну туса хураҫҫӗ.

Китайпа Япони хушшинче суту-илӳ ӗҫне вӑйлатма пулӑшакан ушкӑнсем пӗр вӑхӑтра сӳнсе ларма пуҫланӑччӗ. Халӗ вӗсем паллӑ организацисем пулса тӑраҫҫӗ. Вӗсем кулленех ӗҫлӗхлӗ нумай сӗнӳсем илеҫҫӗ. Японипе Китай хушшинчи суту-илӗве пулӑшас тӗлӗшпе ӗҫлесе тӑнӑ парламент лигинче нумаях та пулмасть парламент членӗсем питӗ сахал пулнӑ. Халӗ вӑл 300 ҫынна пӗрлештерсе тӑрать. Хаҫатсем те калаҫма пуҫларӗҫ. Пысӑк хаҫатсем, суту-илӗве вӑйлатма ыйтса, редакци ҫырнӑ статьясене пичетлеҫҫӗ».

Юлашки почтӑран

Кая юлса тухакан хаҫат

Районти хаҫатсем эрнере икӗ хут — вырсарникун тата кӗҫнерникун тухса тӑраҫҫӗ. Анчах Куславкка районӗнчи «Ленин ялавӗпе» хаҫат редакцийӗ ҫак йӗркене пӑхӑнса ӗҫлемест. Юлашки уйӑхра кунта ҫапла пулса пырать: вырсарникунхи номер кӗҫнерникун тин вулакансем патне саланать, кӗҫнерникунхи вара вырсарникун тухать. Августӑн 9-мӗшӗнчи номере пӗтӗмпе пекех ТАСС панӑ материалсемпе тултарнӑ. Редакци хатӗрлени умстатьяпа виҫӗ заметка кӑна. Апла пулин те редактор С. Ефимов юлташ ҫак номере вӑхӑтра кӑлараймман. Вырӑсла кӑларӑмӗ вулакансем патне августӑн 11-мӗшӗнче, чӑвашла кӑларӑмӗ вара августӑн 12-мӗшӗнче тин саланчӗ. Районти хаҫата вулакансем СССР Верховнӑй Совечӗн V-мӗш сессийӗ усӑлни ҫинчен сесси хупӑннӑ хыҫҫӑн темиҫе кунтан тин пӗлме пултарчӗҫ.

Юлашки 68-мӗш номер та кая юлса тухрӗ. Ку номера—вырӑсланине те, чӑвашланине те—районти почта уйрӑмне 4 кун иртсен леҫсе пачӗҫ. Почта валеҫме тепӗр пӗр-икӗ кун иртнине шута илсен, вулакансем хӑйсен район хаҫатне эрнене яхӑн кая юлса илеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та вӗсем центральнӑй хаҫатсенче Демократиллӗ Германи Республикин делегацийӗ Берлина таврӑнни ҫинчен вуласа пӗлнипе пӗр вӑхӑтра район хаҫатӗнче ҫав делегаци Мускава килсе ҫитни ҫинчен кӑна вулама пултарнинчен тӗлӗнмелли нимӗн те ҫук. Совет Союзӗнче водородлӑ бомбӑна сӑнаса пӑхни ҫинчен пӗлтернине те хаҫат радиоран пӗр эрне кая юлса пӗлтерчӗ.

Паян—августӑн 28-мӗшӗнче — вулакансен аллинче район хаҫачӗн черетлӗ номерӗ пулмалла. Анчах С. Ефимов редактор ҫӗнӗ номере хатӗрлесе ҫитермен-ха.

Хаклӑ парне

КАНАШ. Депори паллӑ машинист СССР Верховнӑй Совет депутачӗ Павел Назарович Назаров иртнӗ уйӑхра йывӑр тиенӗ составсем илсе ҫӳремелли задание 200 процент, ҫӗр кӑмрӑкӗ перекетлемелли плана 250 процент пурнӑҫланӑ. СССР Ҫул-йӗр Министерстви П. Н. Назаров юлташа лайӑх ӗҫленӗшӗн хӑй ятне ҫырнӑ ылтӑн сехет парса премилемелле тунӑ.

Хаклӑ парнепе хавхаланса, паллӑ машинист тата лайӑхрах ӗҫлеме пулчӗ.

Ф. СТЕПАНОВА.

Библиотекӑра

ЕТӖРНЕ. Район центрӗнчи библиотекӑна ҫӳрекенсен хисепӗ кунсерен ӳсет. Халӗ кӗнекесем улӑштарма тата хаҫат-журнал вулама библиотекӑна кулленех 150—200 ҫын пырать.

Библиотекӑри кӗнекесен фондӗнче 24 пин том ытла. Кӑҫал библиотека валли ҫӗнӗрен икӗ пине яхӑн кӗнеке туяннӑ.

Кӗнекесем илсе вулакансен шучӗ икӗ пин ҫынна ҫитнӗ.

Хулари предприятисенче тата районти колхозсенче куҫса ҫӳрекен 12 библиотека ӗҫлет.

И. ПЕТРОВ.

Силос хываҫҫӗ

КӲКЕҪ. «Правда» колхоз уй-хирӗнче кӑҫал силослӑх акнӑ курӑксем вӑйлӑ ҫитӗнчӗҫ. Иртнӗ кунсенче колхозниксемпе ферма работникӗсем МТС механизаторӗсем пулӑшнипе 120 тонна силос хывса хӑварчӗҫ. Ҫак ӗҫре В. Александров, М. Петров, З. Бранькова, Р. Никонорова, Ю. Лазарева юлташсем уйрӑмах тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ.

Н. ВАСИЛЬЕВ.

Футбол вӑййипе РСФСР-та мала тухассишӗн

Юлашки вӑхӑтра Ульяновскра, Ижевскра, Шупашкарта, Уфара, Павловӑра, Горькире, Зеленодольскра, Йошкар-Олара футбол енӗпе РСФСР-та мала тухассишӗн ӑмӑрту пулса иртнӗ.

Халиччен ирттернӗ вӑйӑсенче Ижевск, Уфа тата Горькинчи Сталински районти футбол командисем малта пыраҫҫӗ. Ҫав командӑсем пӗрре те выляса яман. Ульяновск хулинчи динамовецсем тӑватӑ вӑйӑ хыҫҫӑн пилӗк очко пухнӑ. Йошкар-Олари «Динамо» команди Шупашкарти Чапаевски поселок командинчен 2 : 1 шутпа выляса илнӗ, тӑватӑ вӑйӑ хыҫҫӑн тӑватӑ очко пухнӑ. Халӗ ҫак команда ӑмӑртура пиллӗкмӗш вырӑнта пырать. Тутар АССР-ӗнчи Зеленодольскри торпедовецсем тата Павлово хулинчи «Спартак» команди икӗ вӑйӑ хыҫҫӑн икшер очко илнӗ. Юлашки вырӑнта Шупашкар хулинчи Чапаевски поселок футболисчӗсем. Вӗсем пилӗк вӑйӑ выляса пӗр очко кӑна илнӗ. Ҫак командӑн ҫитес вӑхӑтра—Зеленодольскри «Торпедо» командипе тата Павлово хулинчи «Спартак» командипе тӗл пулса вылямалла.

Редактор заместителӗ М. Н. ЯКИМОВ.

КИНО

«РОДИНА»—августӑн 28-мӗшӗнче 12 тата 14 сехетре пуҫланакан сеанссенче «У них есть Родина», 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуҫланакан сеанссенче «Ангел в отпуске».

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителӗ—4-17, ответлӑ секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—13-37, парти пурнӑҫ пайӗ—3-99, ялхуҫалӑх пайӗ—3-97, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ—7-32, издательство пантурӗ—0-23.

НУ 00488 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Тираж 20,000 экз.